А23
161-К

ЛЕОНИД АГАКОВ

# САЛТАК ЧУНӖ



ЧӐВАШГОСИЗДАТ — 1947

Национальная библиотека ЧР
k-000161

~~2340~~

ЛЕОНИД АГАКОВ

# САЛТАК ЧУНĔ

*КАЛАВСЕМ*

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар—1947

161-к
Национальная библиотека
Чувашской
Республики
ПРОВЕРЕНО
20 10 03 НОЯ 2017

# ВИЛĔМРЕН ТЕ ВĂЙЛĂРАХ

Асмонь ятлă яла эпир март уйăхĕн вĕçĕнче, пĕр пĕлĕтлĕ тĕксĕм кун каçалапа пырса кĕтĕмĕр. Малти чаçсем кунтан тухса кайнăччĕ ĕнтĕ, çапăçу шавĕ тăват-пилĕк çухрăмра илтĕнетчĕ, анчах ялта вăрçăн вĕри йĕрĕсем сивĕнменччĕ-ха. Унта та кунта çунса пĕтнĕ çуртсен никĕсĕсем йăсăрланаççĕ; пĕр çĕрте ванчăк тупă кĕпçипе юр ăшнелле тирĕнсе выртать, ун патĕнчех темиçе нимĕç салтакĕ— туппăн пĕтĕм прислуги—урлă та пирлĕ саркаланса выртаççĕ, урам варрине сăра пички пек хулăм хырăмлă, кĕске хӳреллĕ икĕ першерон*) тĕшĕрĕлсе аннă. Ăсталла ан пăх— пур çĕрте те снарядсемпе минăсем алтнă

* Бельги лаши.

лакăмсем палăраççĕ, шурă юр хура хăрăмпа витĕннĕ...

Хамăрăн дивизи хаçачĕ валли майлăрах çурт шыраса урампа тăвалла хăпарнă чух мана хамăн тус, Шăмăршă каччи, капитан Палюков тĕл пулчĕ. Вăл сылтăм аллине бинтпа çыхса мăйĕнчен çакнине курсан, эпĕ тӳрех:

— Амантрĕç-им? Хăçан? Хытах-и?—тесе ыйтрăм.

— Ытла хытах мар та... питĕ тарăхмалла пулчĕ,—терĕ вăл.

— Мĕнле апла?

— Фрицсене ялтан хăваласа кăларсаттăмăр ĕнтĕ эпир, вĕсем мулкачсем пекех тапса сикнĕччĕ, çав вăхăтра таçтан мурĕнчен пĕр ухмах пуля пырса сăхрĕ...

— Халь вара медсанбата каятăн-и?

— Çук-ха, пĕр çĕре кĕрсе тухмалли пур.

— Ăçта?

— Калмăстăп. Вăхăту пулсан—атя манпа пĕрле... Эс ăçталла уттараттăнччĕ?

Эпĕ каласа патăм.

— Чăнах, атя манпа. Инçе мар, çавăнта, ял вĕçне,—чĕнчĕ Палюков татах.

— Мĕн тума?

— Курăн унта. Сăмах майĕн каласан, хăвна валли питĕ тухăçлă материал тупма пултаратăн.

— Хаçата çырма-и?

— Хаçат валли кăна мар, повесть валли те пулĕ и тен...

Ку сăмахсем мана питех те интереслентерсе ячĕç. Дивизи хаçачĕ валли вăл мана яланах паха фактсем паратчĕ те, халь те иртнĕ каçхи çапăçу çинчен пĕлтересшĕн пуль, тесе шухăшларăм.

— Çапах та, мĕн пулнă?

Вăл пурĕпĕр уççăн каласа памарĕ. Темиçе хут ыйтсан та: „пырсан курăн", терĕ кăна. Вара манăн ирĕксĕрех килĕшмелле пулчĕ.

Çур сехетрен эпĕ редакцие çырма хĕрринче ăнсăртран тĕрĕс-тĕкĕл юлнă чылаях пысăк, икĕ пӳлĕмлĕ çурта вырнаçтартăм та, Палюковпа пĕрле анаталла, ял вĕçнелле анса кайрăм. Çул çинче унран хамăр ăçта кайни çинчен татах ыйтрăм, анчах вăл мана çав-çавах ответ памарĕ, кула-кула илчĕ çеç:

— Лайăхрах интриговать тăвам-ха сана... Эсир, писательсем, вăл ĕçе юрататăр вĕт. Вулакана хăвăрăн чăн шухăшăра каламасăр сăмсаран çавăтса пыратăр-пыратăр та, кайран сасартăк шарт! тĕлĕнтерсе пăрахатăр.

Манăн куна хирĕç калама сăмах та тупăнмарĕ, çавăнпа та эпĕ текех ыйтмарăм та, чĕнмерĕм те. Часах эпир ял вĕçĕнчи пĕр çĕр çулхи хурама айне йăпшăнса ларнă, тул енчен тăмпа сĕрсе, пурпа шуратса лартнă пĕчĕкçеç пӳрт тĕлне çитсе тăтăмăр.

— Ак ҫакӑнта пулма кирлӗ,—терӗ Палюков.—Ҫыннисем сывах пулсан...

Вӑл ҫенӗке кӗрсе пӳрт алӑкӗнчен хуллен кӑна шаккарӗ.

— Кӗрӗрех, кӗрӗр,—илтӗнчӗ шалтан хӗрарӑм сасси. Палюков ӑна илтсен хаштах сывласа ячӗ те, ман ҫине темле улшӑннӑ куҫӗсемпе пӑхрӗ. Эпӗ вӑл хытӑ пӑлханнине сисрӗм.

— Сывах пулас, ҫавӑн сассиех...

Эпӗ ун ҫине малтанхинчен те ытларах тӗлӗнсе пӑхса илтӗм.

„Мӗне пӗлтерет ку? Кама шыраса тупрӗ вара манӑн тус?"

Палюков ҫав хушӑра алӑка картах туртса уҫса шалалла кӗчӗ. Эпӗ ун хыҫҫӑн кӗрсе тӑтӑм.

— Сывӑ-и, анне? Пурӑнатӑн-ха эппин?—терӗ Палюков, малти кукӑрта тӑракан 45—50 ҫулхи хӗрарӑм патнелле аллине тӑсса пырса.

— Сывах-ха, ывӑлӑмсем, сывах, пурӑнкалатӑп,—терӗ хӗрарӑм, Палюковӑн аллине тытса.—Ку таранччен вилменнине малашне пушшех те пурӑнма шутлатӑп ӗнтӗ... Эпир вӗт халь ҫӗнӗрен ҫуралнӑ ҫынсем, тес пулать.

Палюков хыҫҫӑн ӑна эпӗ те ал патӑм. Хам ҫав хушӑрах ун ҫинчен куҫ илмесӗр пӑхрӑм. Унӑн сенкертерех тӗслӗ йӑваш куҫӗсем мана тӳрех кӑмӑла кайрӗҫ. Анчах ҫамки ҫинчи

тарăн йĕрсем тата унăн çӳçĕсем йăлтах ш-у ралса кайни—вăл питĕ нумай тӳссе ирттернине систерчĕ. Кунпа пĕрлех манăн тĕлĕнӳ ӳсĕçемĕн ӳссе пычĕ.

„Мĕншĕн Палюков ăна „анне", терĕ? Мĕншĕн вăл ăçта та пулин урăх çĕре мар, шăп çак пӳрте, çак хĕрарăм патне килсе кĕчĕ? Паллать-шим ăна вăл? Епле майпа? Инçетри Атăл çинче çуралса ӳснĕ чăваш ачипе çак Орёл облаçĕнчи ватă хĕрарăм хушшинче мĕнле çыхăну пулма пултарать?.."

Çавăн пек нумай ыйтусем çуралчĕç ман пуçра, анчах пĕрин пирки те ответ тупăнмарĕ.

— Ларсамăр, ларсамăр, ма ура çинче тăратăр,—терĕ хĕрарăм, тенкел çине кăтартса.— Ывăннă вĕт эсир, пĕлсех тăратăп, сирĕн ĕç вăл... ай-ай, çăмăл мар! Çиесси те килет пулĕ сирĕн, кăштах вăхăтăр пулсан—халех мĕн те пулин пĕçерсе çитеретĕп... Нимех те çук та ĕнтĕ, немуйсем* тĕппипех шăлса кайрĕç те, анчах, сирĕншĕн пулсан, юлашки татăк та шел мар...

Эпир стена çумĕнчи тăрăхла сак çине лартăмăр. Хĕрарăм васкасах чăланалла кĕрсе куршак-чӳлмексене хускаткалама тытăнчĕ.

— Ан чăрман, пире нимĕн те кирлĕ мар,

---

*Нимĕçсем

Варвара Васильевна... Эс кил-ха кунта, лар,— терĕ ăна Палюков.

Манăн куççем чарăлсах кайрĕç.

„Ăçтан пĕлет ку унăн ятне?!."

Анчах хĕрарăм та, çак палламан çар çынни хăйне ятпа чĕннине илтсен, манран кая мар тĕлĕнсе кайрĕ курăнать. Вăл чăлан алăкĕнче чаранса тăчĕ те, Палюковпа иксĕмĕр çине çав тери тинкерсе пăхрĕ.

— Ман ята сире кам каларĕ? Кўршĕсем-и?

— Никам та каламан, Варвара Васильевна,— терĕ Палюков. Темшĕн ун сасси кăштах чĕтрерĕ. Вăл паçăрхи, пўрте кĕрес умĕнхи пекех тарăнăн сывласа илчĕ те, тепĕр хут:— Никам та каламан, хамăрах пĕлетпĕр,—терĕ.

— Епле майпа?—ыйтрĕ хĕрарăм, пирĕн патарах пырса.

— Çаплах,—терĕ Палюков. Унăн пичĕ çинче халь çемçе кăна кулă пăларчĕ.

— Епле-ха апла? Тĕлĕнтеретĕр...

Пĕр хушă шăпах пулчĕ. Хĕрарăм Палюкова паллама тăрăшнă пек сăнаса пăхса тăчĕ, эпĕ ĕнтĕ пачах та ăнланмасăр пĕрре пĕрин çине, тепре теприн çине пăхкаласа лартăм.

— Эс мана астумастăн-и вара, Варвара Васильевна?—ыйтрĕ Палюков.

— Çук, астумастăп...—пуçне пăркаларĕ хĕрарăм.

— Мана нихçан та курман пек-и?

— Темле-çке?..

— Апла пулсан...—Палюков пичĕ çинче кулă тата ытларах палăрчĕ халь.—Хам аса илтерем-ха эппин сана... 1941 çулта, кĕркунне, нимĕçсем кунталла çĕмĕрсе килнĕ чух...

Хĕрарăмăн куçĕсем мăч-мăч-мăч туса илчĕç. Палюков хăй сăмахне малалла каларĕ:

— Нимĕçсем кунталла çĕмĕрсе килнĕ чух, пĕрре, сĕм тĕттĕм каç, сирĕн алăка сасартăк такам килсе шаккаманччĕ-и?

Хĕрарăм çăвар тулли шыв сыпнă пекех тăчĕ.

— Çав, шаккаканни, йывăр аманнă красноармеец пулнăччĕ. Эсир, Петя ятлă ывăлăрпа, ăна çавăтса кӳртсе эмеллеме тытăннăччĕ... Çапла-и?

— Çапла...—хуллен кăна пăшăлтатса илчĕç хĕрарăмăн çӳхе тутисем.

— Çавăн сăнне астуса юлаймарăр-и вара эсир?

Хĕрарăм:—А-ах!—тесе вăрăммăн кăшкăрса илчĕ те аллисене хире-хирĕç шарт! çапрĕ. Сасартăк калама та çук тĕлĕннипе унăн сăнĕ те улшăнса кайрĕ, аллисем те чĕтреме тапратрĕç.

— Миша! Миша-и вара эс?

— Çавă пек туйăнать хама!—кулса ячĕ Палюков.

— Турăçăм! Кам шухăшлама пултарнă кун пек puласса...

— Татах тĕл пуласса-и?

— Ара...

— Мĕн тăвас тетĕн, пурăнăçра тĕрлĕренех пулать вăл. Сăртпа сăрт тĕл пулмасть, анчах çынпа çын яланах тĕл пулма пултарать,— тенĕччĕ эсир мана ун чух. А хальхи вăхăтра, эпир пĕрмай вырăнтан вырăна куçса çӳренĕ чух, кунтан питех тĕлĕнмелли те çук пуль...

— Вăл çаплах ĕнтĕ, çаплах,—килĕшрĕ хĕрарăм, халь те Палюков çине тĕлĕннĕ куçĕсемпе пăхса тăрса.—Пулаççĕ вĕт çакăн пек телейлĕ тĕлпулусем, тавçăрса илме те, ĕненме те хĕн... Юмахри пек, тупата!

— Юмахри пекрех çав,—килĕшрĕ Палюков.—Пуринчен ытла çавăн чухнехине, хĕрĕх пĕрремĕш çулхине, аса илсен...

— И-и, ывăлăм, эс пĕтĕмпех пĕлместĕн-ха, кайран мĕн-мĕн пулнисене пĕлместĕн, вĕсем çинчен пĕлсен—пушшех те тĕлĕнсе каяс пулать...

Сасартăк хĕрарăм икĕ аллипе пĕр харăс хăйĕн пуçне çавăрса тытрĕ те, тем пулнă пекех хыпăнса ӳкрĕ.

— Ой, ватсупнă, мĕн-ха эп çăвара карса тăратăп?! Ара, сире епле те пулин хăна тă-

вас пулать вӗт! Ҫитерес-ӗҫтерес... Тӗлӗннипе, савӑннипе ҫухалсах кайрӑм пулас...

Эпир ӑна пӗтӗм чӗререн ӳкӗтлерӗмӗр, пире ним те кирлӗ мар, ан чӑрман, терӗмӗр, анчах вӑл пирӗн сӑмахсене хӑлхана та чикесшӗн пулмарӗ. Йӑпӑр-япӑр шыв ӑсса килсе апат ҫакса ячӗ, чей вӗретме тапратрӗ, кӳршӗсем тӑрӑх ҫӳрекелесе пӗр ҫур литр килти эрехе те тупса пычӗ. Вӑл ҫавӑн пек ӑшаланса, унта-кунта чупкаласа ҫӳренӗ хушӑра эпӗ Палюкова ҫыпӑҫмаллипех ҫыпӑҫрӑм.

— Кун ҫинчен эс мана мӗншӗн ку таринччен каласа паман вара? Эп сана—тус, тесе пурӑнатӑп, а эс манран пӗтӗмпех пытаратӑн иккен?

— А мӗн пытарнӑ эп санран?—терӗ Палюков мана хирӗҫ лӑпкӑн кӑна.—Окруженире пулнине те, партизансемпе ҫӳренине те, пурне те каланӑ. Мӗн тата?

— А ку факт ҫинчен, ҫак хӗрарӑм хӑвна епле ҫӑлни ҫинчен каламан-ҫке?

— Ну, тусӑм, пур вак япаласене те аса илсе каласа пама—эпӗ писатель мар,—тесе кулса ячӗ Палюков.—Детальсене шӗкӗлчесси вӑл—сирӗн професси. Тата, тепӗр тесен, пурӑнаҫра тӳссе ирттернӗ хӑшпӗр фактсене аса та илес килмест тепӗр чух. Йывӑр. Чуна ыраттарать.

— Ҫапах та, ку расра эс манран пурӗпӗр

хӑтӑлаймастӑн, каласа паратӑнах,—ҫинех тӑтӑм эпӗ.—Ҫитменнине, эс мана кунта „материал пулать“, тесе илсе килтӗн. Ӑҫта вӑл?

Палюков кӑштах тытӑнкаласа тӑчӗ те—парӑнчӗ.

Ака мӗн пӗлтӗм вара эпӗ.

* * *

...1941 ҫулхи октябрь уйӑхӗнче Хӗрлӗ Ҫарӑн ывӑнса ҫитнӗ чаҫӗсем, тӑшманпа кунӗн-ҫӗрӗн ҫапӑҫса, Орӗл хули еннелле чакса килнӗ. Паттӑррӑн ҫапӑҫнӑ пирӗн боецсем, кашни рубежра чарӑнса тӑмассеренех нимӗҫсене ҫӗршерӗн-ҫӗршерӗн сулнӑ, вӗсен техникине ҫӗмӗрнӗ, ҫунтарнӑ, анчах, вӑйсем тан пулманнипе, вӗсен каллех хӗвелтухӑҫнелле чакса килмелле пулнӑ.

Пӗр чугунҫул станцийӗ ҫывӑхӗнче Н-ски полк тӑватӑ кун ҫапӑҫнӑ. Тӑватӑ кун хушши чарса тӑнӑ вӑл нимӗҫсен „СС“ дивизине. Ҫӗр татти-сыпписӗр чӗтӗреннӗ. Бомбӑсем, снарядсемпе минӑсем ҫурӑлнипе сывлӑш вӗриленсе ҫитнӗ, таврана темӗн тӗрлӗ йӳҫӗ тӗтӗм шӑрши ҫапнӑ. Ҫынсем ҫак хушӑра пӗрре те куҫ хупман, ӑша пӗр тӗпренчӗк яман, окопсен гӗпне пухӑннӑ шыва ывӑҫла-ывӑҫла ӗҫнӗ кӑна. Тӑваттӑмӗш кун вӗҫнелле ротӑсенче 10—12-шер ҫын ҫеҫ юлнӑ, вӗсем те ҫурри аман-

нăскерсем пулнă, çапах та чакасси çинчен никам та шутламан.

Вилĕмлĕ çапăçу пулнă вăл...

Пулемётчик Михаил Палюков, икĕ хут аманнăскер, пĕтĕм расчётран пĕччен кăна тăрса юлнă пулин те, тăшман салтакĕсене утă çулнă пекех çулнă, ура çине тăрса пирĕн окопсем еннелле чупма пуçласанах вĕсене каллех те каллех çĕре вырттарнă. Каç пуличченех çавăн пек çапăçнă вăл, анчах сасартăк ун çывăхнех йывăр снаряд ӳкнĕ те—ăна ним пĕлми туса пăрахнă. Вăл кăштах тăна кĕрсен, таврара нимĕн те курăнман, пăч тĕттĕм пулнă. Хура пĕлĕтре кăна, унта-кунта, çутă куçсем пек, çăлтăрсем ялкăшса тăнă. Пулемётчикăн пĕтĕм шăмми-шакки ыратнă, ĕçесси килнипе çăвар ăшчиккине çилĕм сĕрнĕ пек туйăннă... Вăл ерипен чавси çине çĕкленсе йĕри-тавралла пăхнă, анчах çăра тикĕт пек тĕттĕмлĕхсĕр пуçне нимĕн те курайман. Çывăхра нимĕнле сас-чӳ те пулман. Çапăçу шавĕ таçта инçетре, сылтăм енче илтĕннĕ. Çав енчех, ик-виç çĕрте, пушар çутисем ялкăшнă...

— Мĕн пулнă капла?—текен ыйту çуралнă Палюков пуçĕнче.— Мĕншĕн эп тăр-пĕччен, мĕншĕн никам та çук?..

Кăштах тĕлĕнсе выртнă хыççăн вăл хăйнехăй ответ панă:

— Пирĕннисем чакса кайнă. Мача пăрахса хăварнă... Вилнĕ, тесе шутланă пулмалла ĕнтĕ...

Пĕр вăхăт вăл ним тума пĕлмесĕр выртнă.

Çĕрле. Сивĕ. Виç-тăват çĕртен аманнă, çан-çурăм хускатмалла мар. Таврара пĕр чун та çук. Ăçта хамăрăннисем, ăçта нимĕçсем— нимĕн те паллă мар. Хăш еннелле каймалла? Тен, темиçе çĕр метр кайсанах—нимĕçсен аллине пырса лекмелле? Вара? Вара, паллах, вилĕм... Анчах кунта выртсан та нумаях пурăнас çук. Кунта выртсан та—вилĕм. Мĕн те пулин тăвасах пулать. Ăçталла та пулин каймаллах. Кам пĕлет, тен çăлăнма май килĕ? Тен хамăрăннисем тĕлнех çитсе тухăп?

Вилес килмен Палюковăн. Унăн пурăнас килнĕ. Вăл пĕтĕмпе те вунтăхăр çулта çеç пулнă, унăн малашне нумай пурăнмалла пулнă-ха, вăл çав малашнехи пурăнăçшăн çапăçнă паян, çавăншăн рубежран пĕр утăм та чакман!

Пурăнас кăмăл çĕнтернĕ. Суранĕсем тем пекех ыратсан та, унтан та кунтан юн сăрăхнă пулин те, малта мĕн пулассине пĕлмесен те, вăл окопран шуса тухнă та, ăнсăртран алла лекнĕ винтовка çине тайăнса, тĕттĕмелле утнă. Вăл малтанах хăш еннелле кайнине те чухламан, пĕлĕтре пĕр пысăкрах çăлтăра суйласа илнĕ те—çавăн çине пăха-пăха утнă.

Унăн вăйĕ сахалланнă, вăхăчĕ-вăхăчĕпе пуçĕ çавăраннă,—ун пек чух пĕр хушă тăрса канма тивнĕ, анчах çапах та шалти сасă ăна пĕрмай: „ут, ут, шăвăн, çăлăнăç пулмаллах“,—тенĕ те, вăл юлашки вăй тумламĕсене пухса, шăлĕсене çыртса лартса, каллех малалла утнă.

Нумай кайнă-и вăл çапла, сахал-и,—ăна вăл тавçăрса илме пултарайман,—анчах сасартăк ун умне çўллĕ те парка йывăç мĕлкисем тухса тăнă.

— Мĕн ку? Вăрман-и? Ял-и?—тесе ыйтнă Палюков хăйĕнчен хăй.

Вăрман пулсан—унта кĕрсе кайса çухаласран хăрамалла, ял пулсан... тен унта халь нимĕçсем?

Хăй пачах халран кайма тытăннине, тек ура çинче тăма пултарайманнине туйса, вăл çав йывăçсем патнерех пынă. Ку—ял иккен. Чылай шухăшласа тăрсан, вăл çав ял вĕçĕнчи пўрте çитсе пăхма шут тунă.

— Мĕн пулать, мĕн килет...

Пырса шакканă вара пĕр пĕчĕк пўрт алăкĕнчен.

—Тархасшăн, çĕр каçма кўртĕр...

Алăка ватăрах хĕрарăм уçнă. Унăн хăрах аллинче пĕчĕк лампа пулнă. Хăй умĕнче вилĕм сăнĕ çапнă, юнланса пĕтнĕ красноармеец тăнине курсанах, вăл ăна йăвашшăн кăна:

— Кĕр, ывăлăм, кĕр, çĕр касмалăх вырăнĕ тупăнĕ,—тенĕ.

Палюков хăрах урипе алăк урлă ярса пуснă та, çав самантрах урайне ӳкнĕ. Урăх вăй пулман унăн. Куçĕсем хуралса килнĕ, пуçĕ ним майсăр шавлама тытăннă та—вăл ăнран кайнă.

Тепĕр кунне, кăнтăрла çитеспе, куçĕсене уçсан, вăл хăй тап-таса пӳртре, çемçе минтерсем çинче выртнине курнă. Унăн пур суранĕсене те такамăн çепĕç алли тап-таса катан-пирпе çыхса янă. Хăй ăçта выртнине вăл тăруках тавçăрса та илеймен.

— Госпитале лекнĕ-ши эп капла?

Анчах хăй умне пĕр вунвиç çулхи арçын ача пырса тăрсан, ăнланнă вара:

— Каç килсе кĕнĕ çĕртех пулас...

Арçын ача ун çине кăштах ютшăнса, кăштах тĕлĕнсе пăхнă.

— Эс мĕн ятлă?—тесе ыйтнă Палюков хуллен.

— Петя,—ответ панă лешĕ.

— Шыв ĕçтер-ха мана, Петя. Ăш хыпса тухать...

Петя витререн шыв ăснă та, Палюкова тăрса лармалăйывăррине кура хăрах аллипе унăн пуçне çĕклесе, тепĕр аллипе куркана ун çăварĕ патне илсе пырса ăна ĕçтернĕ. Ĕçнĕ хыççăн Палюков куçĕсене хупса тĕлĕр-

ее кайна пек пулна. Çавах та вăл пӳрт алăкĕ уçăлса хупăннине, хĕрарăм сасси: „Вăранмарĕ-и халь те?"—тесе ыйтнине, Петя ăна хирĕç: „Эп ăна шыв патăм",—тенине, хĕрарăм: „Шыв памалла марччĕ, эп ăна валли сĕт илсе килтĕм",—тесе чăланалла утса кĕрсе кайнине те илтнĕ. Палюков куçне уçса: „Ан чăрманăр тархасшăн",—тесшĕн пулнă, анчах калас сăмах пыртан тухайман.

Куççене тепре уçсан, ун умĕнче килхуçи хĕрарăм аллине пысăк кружка тытса тăнă.

— Сĕт вĕретрĕм сана валли, ĕç-ха,—тенĕ вăл йăвашшăн,—ĕç, вăй кĕтĕр пăртак...

Йывăррăн сывлакан Палюков ăна калама çук ырă кăмăлпа сăнаса выртнă.

— Мана тăван анне пекех пăхатăр-çке эсир...

— Епле пăхас-ха тата ман сана?—тĕлĕннĕ хĕрарăм. —Эс пире тăшмансенчен хӳтĕлесе аманнă вĕт-ха, пирĕншĕн юн тăкнă... Ме-ха, ĕç, сĕчĕ сивĕнсе кайиччен.

Вăл, Петя пекех, хăрах аллипе пуçне çĕклесе, тепринпе кружка тытса, Палюкова ăшă сĕт ĕçтернĕ. Юлашки тумламсене ĕçсе ярсан, Палюков тарăнăн сывласа илнĕ те:

— Мĕнпе тав тума пĕлĕп-ши эпĕ сире?—тенĕ.

— И-и, тав тăвасси пулĕ-ха вăл,—аллипе сулнă хĕрарăм.— Сăртпа сăрт тĕл пулмасть,

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ
161-К

çынпа çын яланах тĕл пулма пултарать. Пуçăмăрсем сывă пулччăр кăна. Халь çавăнтан хăрушă...

Хĕрарăм Палюков пуçĕ вĕçне ларнă та, вĕсем хушшивче чунран тухакан ăшă кала çу пуçланса кайвă. Хĕрарăм ун çинчен ыйтса пĕлнĕ: ăçти çын, тăвансем-мĕнсем пур-и, вăрçăччен кам пулнă—йĕркипех. Хăй çинчен те каласа панă: унăн упăшки советра ĕçленĕ те, колхозсем тунă вăхăтра ăна кулаксем вĕлернĕ, кайран ун вырăнне совета халăх Варвара Васильевнăна хăйне суйланă, вара вăл тăватă çул хушши ялсовет членĕ пулнă, партине кĕнĕ, каярахпа сĕт фермин пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ. Анчах ĕнесене Хĕвелтухăçнелле, вăрçă çук вырăнсене ăсатнă та, вăл ĕççĕрех тăрса юлнă. Нимĕççем килсен хăйне ырă пулас çуккине пĕлсе, вăл тем пекех кунтан тухса каясшăн пулнă, анчах ывăлĕ чирлĕ выртнă пирки—каяйман.

— Çапах та, хама тем тусан та, тăшмана парăнас шухăшăм çук,—тенĕ вăл.—Мана халь тин никам та чура тума пултараймĕ... Икĕ ывăлăм Хĕрлĕ Çарта çапăçççĕ пулать те—эпĕ тăшман умне чĕркуçленетĕп-и? Актив, пуçăма касса татчăр...

Çĕрле Палюков каллех вĕриленсе кайнă ăнран тухсах аташма тапратнă, вырăн çинчен сике-сике тăрса хăлаçланнă, команда

сем панӑ... Варвара Васильевна ҫӗрӗпех чӑлӑм куҫ хупмасӑр пӑхнӑ ӑна, пуҫӗ ҫине тутӑр йӗпетсе хурса лӑплантарнӑ, ҫываратса яма тӑрӑшнӑ. Ир енне тин вара Палюков, шӑпланса, вилнӗ пекех ҫывӑрса кайнӑ.

Ҫав каҫхинех яла нимӗҫсем пырса кӗнӗ...

Ун ҫинчен Варвара Васильевна ирхине шыв ӑсма кайсан пӗлнӗ. Ҫӑл патне пӗр хӗрарӑм темле хутланса, такам курасран хӑранӑ пек унталла-кунталла пӑхкаласа чупса пынӑ та, Варвара Васильевнӑран шӑппӑн кӑна:

— Сан патна пымарӗҫ-и-ха?—тесе ыйтнӑ.

— Камсем?—тӗлӗннӗ ку.

— Ай пӗлместӗн-им? Илтмен-им вара?

— Ним те пӗлместӗп...

— Ара, ял тулли нимӗҫ вӗт!

Варвара Васильевна аллинчи витри шӑнкӑртах тухса ӳкнӗ. Хӑй вӑл ҫавӑнтах хут пек шуралса кайнӑ.

— Хӑҫан килнӗ вӗсем?

— Кӗҫӗр, кӗҫӗр! Килтен-киле ҫӗрӗпех тӗрӗслесе ҫӳрерӗҫ вӗт. Эсӗ ытла ял вӗҫӗнче пурӑннӑ пирки пыман пуль ҫеҫ сан патна... Асту, куҫа курӑнакан ытлашши япала пур пулсан—пытар, пӗтӗмпех тасатса тухаҫҫӗ.

Варвара Васильевна урӑх калаҫса та тӑман. Чӗтрекен аллисемпе витресене картлӑ кӗвентерен ҫакнӑ та, часрах килнелле утнӑ. Утнӑ темелле те мар, чупсах кайнӑ вӑл. Ури-

сем айӗнче ҫӗр пуррине те туйман. Витресенчи шывӗ сирпӗнсе кӑна пынӑ.

—„Куҫа курӑнакан ытлашши япаласем пур пулсан—пытар“... Ҫак сӑмахсем Варвара Васильевнӑн хӑлхинчех янӑраса тӑнӑ.

„Пытар...“

Ҫук, ун пуҫӗнче япала пытарас шухӑш мар халь. Унӑн пӳртӗнче темӗнле япаларан та хаклӑраххи пур—аманнӑ ҫамрӑк салтак. Япаласене мар, часрах ҫавна пытармалла халь Варвара Васильевнӑн. Инҫетерех, тӗплӗрех, тӑшман ниепле те шыраса тупмалла мар ҫӗре пытармалла... Анчах—ӑҫта? Хӑш вырӑна? Ҫулла пулсан—татах та вырӑн тупма пулатчӗ, анчах халь кӗркунне, сивӗ, а вӑл—чирлӗ, суранӗсем тӳрленме те пуҫламан.

Амӑшӗ ҫав тери пӑлханнине Петя вӑл пӳрте кӗрсенех сиснӗ.

— Мӗн пулчӗ сана?

— Ан шарла,—тенӗ ӑна амӑшӗ.

Витрисене чӑлана лартнӑ та, васкаса каллех тулалла тухнӑ. Вӑл Палюкова пытармалли май шыраса килкарти тавра темиҫе хут та ҫаврӑннӑ, анчах юрӑхлӑ вырӑн тупӑнман: ни витере, ни нӳхрепре, ни аслӑк ҫинче... Нимӗҫсем ухтарас пулсан—кунта ӑна ҫӑмӑллӑнах тупма пултарнӑ. Тупсан вара... о, тупсан мӗн пулассине Варвара Васильевна пит лайӑх пӗлнӗ! Вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа

нимӗҫсем пирӗн ҫӗр ҫинче мӗн чухлӗ айӑпсӑр юн юхтарни ҫинчен вӑл ҫителӗклӗ илтнӗ.

Тӑхтаса тӑма юраман. Яла каҫах килсе кӗнӗскерсем, нумай килсенче ухтарса ҫӳренӗскерсем, вӗсем кунта та кашни самантрах килсе кӗме пултарнӑ. Вӑхӑчӗ-вӑхӑчӗпе Варвара Васильевнӑна урамра такам ури сассисем илтӗннӗ пек туйӑнса кайнӑ. Пӑлханнӑ чӗри тата хытӑрах тапма пуҫланӑ вара унӑн.

— Пытарас, ӑҫта та пулин, епле те пулин пытарас, хамӑр ҫынна урнӑ кашкӑрсен аллине парас мар... Ҫӑлас! —Ҫак шухӑш нимӗн канлӗх памасӑр вӗресе тӑнӑ унӑн пуҫӗнче.

Ним тума аптӑранӑ енне, вӑл анкартинелле тухнӑ. Кунта та аманнӑ красноармееца пытармалли майлӑ вырӑнах пулман ҫав. Арпалӑх—шанчӑксӑр, тата хальхи ҫанталӑкра унта чирлӗ ҫын мар, сывви те тӳсес ҫук. Ҫӗрулми пусси... Ҫук, унпа та ӗҫ тухмасть. Мӗн тӑвас-ха ӗнтӗ, ӑҫта пытарса хӑтарас ку йӗкӗте?

Сасартӑк Варвара Васильевнӑн пуҫне телейлӗ шухӑш пырса кӗнӗ: ялтан пӗр ҫухрӑм ҫурӑра, сӑрт ҫамкинче, пӗркунне чылай окопсем алттарнӑччӗ, вӗсенчен хӑшӗсене землянкӑсем пекех тунӑччӗ. „Вӑхӑтлӑха ӑна ҫавӑнта кайса хурсан—мӗнле-ши? Неушлӗ нимӗҫсем ҫав шӑтӑксене те ухтарса ҫӳрӗҫ?

Мĕн шыраччăр унта вĕсем? Тем тесен те, ку шанчăклă пулать... Кая пултăр кăна, тўрех çавăнта илсе каятпăр. Улăм сарас, витĕнме тумтирсем парас, каç-каç хамăр кайса пăхăпăр"...

Çапла шухăшласа, Варвара Васильевна часрах пўрте кĕнĕ. Палюков тĕлĕрсе кайнă пулнă, хăш чух кăна йывăррăн йăнăшкаласа илнĕ те, типсе ларнă тутисене çулла-çулла илнĕ.

— Такамсем килеççĕ пирĕн пата!—тенĕ сасартăк чўрече умĕнче ларакан Петя.—Иккĕн-виççĕн...

Варвара Васильевна, халь çеç чăлана кĕрсе апат хатĕрлеме тытăннăскер, тутине çыртса лартнă та, куçĕ хуралса килнипе кăшт çеç ўкмен. Вăл урам алăкĕ уçăлса хупăннине, унтан пусма картлашкисем тăрăх темиçен таканлă атăсемпе кĕмсĕртеттерсе хăпарнине уççăнах илтнĕ.

— Пулчĕ... Тытрĕç... Вĕлереççĕ...—çиçĕм пек çиçсе илнĕ шухăш унăн пуçĕнче.

Çав самантрах вăл Палюков выртакан вырăн патне чупса пырса ăна хăй кĕлеткипе картласа тăнă.

„Ăна вĕлериччен малтан хама вĕлерччĕр..."

Пўрте виçĕ нимĕç кĕрсе тăнă. Вĕсем Варвара Васильевнăна пĕчĕккĕ чух асламăшĕн юмахĕсенче илтнĕ усалсем, чуниллисем пе-

кӗх туйӑнса кайнӑ. Хӑйсем хушшинче темскер мӑкӑртатса илсен, вӗсенчен пӗри, ҫурхи кашкӑр пек ырханни, Варвара Васильевнӑна ҫисе ярас пек пӑхса, халь те вӑранман Палюков ҫине пӳрнипе тӗллесе ыйтнӑ:

— Кто... этот мужчин?

— Ман ывӑл... ывӑл...—тенӗ Варвара Васильевна чӗтрекен сасӑпа, Палюкова тӑшман куҫӗсенчен тата лайӑхрах картлама тӑрӑшса. —Чирлӗ выртать, ним пӗлми...

— Нумайранпа чирлет-и?—тесе ыйтнӑ ҫав нимӗҫех, вырӑс сӑмахӗсене хуҫкаласа.

— Чылайранпа ӗнтӗ... Икӗ эрне ытла.

— Мӗнле чир вара унӑн?

— Пӗлместӗп... Тиф пулмалла...

— Тиф?!

— Тифах пуль, тетӗп ҫав. Пирӗн патра халь вӑл чир питӗ сарӑлнӑ та...

Нимӗҫсем пӗр-пӗрин ҫине кӑн-кан пӑхкаласа илнӗ те тек ыйтса-каласса тӑмасӑрах кӑптӑртатса тухса кайнӑ. Каялла ҫаврӑнса та пӑхман.

—А-а, ҫапах та хӑрама пӗлетӗр-и, ҫӗленкалтасем? Сире эп тиф мар, халерӑпа чума ертсе чыхӑнтарӑттӑм,—чышкипе юнаса илнӗ Варвара Васильевна, нимӗҫсем васкаса тӑвалла хӑпарса кайнине чӳрече витӗр пӑхса тӑрса.

Варвара Васильевна кулса янӑ, мӗншӗн

тĕсен вăл нимĕçсене хăратас шутпа калать, мĕншĕн тесен вĕсем тифран шуйттанран хăранă пекех хăранă. Пырать—çавă ăнсăртран аса килнĕ ăна, унсăрăн тем тумаллаччĕ-ха, темле тасалмаллаччĕ вĕсенчен!..

Çапах та, лăпланса ларас пулмасть. Пĕринче ĕç майлашрĕ, анчах тепринче майлашмасан та пултарать.

— Епле пулсан та, ку йĕкĕте шанчăклă вырăна ăсатас, вара уншăн та шанчăклăрах, хама та лăпкăрах пулĕ...

Вăл хăйĕн шухăшне Петьăна ăнлантарса панă та, ăна сăртри дзотсене кайса пăхтарнă („хăшĕ лайăхрах, типĕрех, хăшĕнче, тен, çĕрле вут хурса ăшăнма та пулать-и"...), хăй Палюков валли çимеллисем хатĕрленĕ. Петя таврăнсан вара, тулта ним курăнми пăч тĕттĕм пулса çитсен, вĕсем Палюкова, иккĕш икĕ енчен çавăтса, хирелле илсе тухса кайнă. Варвара Васильевна çул тăршшĕпех йăпатса пынă ăна:

— Эс ан пăшăрхан, ывăлăм... Хăвăншăнах аван пулать ку. Ак, кăштах сывалатăн та, унтан вара мĕн тăвасси курăнĕ... А эпир сана пăрахас çук. Кашни каçах пырса тăрăпăр сан патна, мĕн кирлине пĕтĕмпех илсе пырăпăр, ним хуйхи-суйхи те пулмĕ санăн. Енчен, нимĕçсем хамăр ялтан тухса кайсан,

сана каллех киле илсе пырӑпӑр... Ан пӑшӑрхан кун пирки... Лӑпкӑ пул..

— Ма калатӑр эсир мана ку сӑмахсене? Эпӗ хам та аван ӑнланатӑп вӗт..—тесе пывӑ Палюков хуллен.

Тепӗр сехетрен Варвара Васильевнӑпа Петя, Палюкова пӗр вӑрттӑн дзота вырнаҫтарса хӑварса, киле таврӑннӑ. Крыльца умне ҫитсен, Варвара Васильевна сасартӑк чарӑнса шухӑшла кайнӑ пек пулнӑ.

— Эс кӗр,—тенӗ вӑл ывӑлне,—ман пӗр ӗҫ пур...

— Таҫта каятӑн им?—ыйтнӑ Петя.—Ан кай, эп пӗччен юлма хӑратӑп...

— Ҫук, ниҫта та каймастӑп.. Йӑпӑрт кӑна эпӗ...

Петя кӗрсе кайсанах вӑл ҫенӗкрен хупӑлчаллӑ салтак котёлокӗ илсе тухнӑ. Унтан кӗсъинчен темле япала кӑларса, ӑна кипкепе пит тӗплӗ чӗркенӗ те—ҫав котёлок ӑшне хунӑ, вара лупас айӗнчи пӗр кӗтессе кайса, ҫӗр айне чавса пытарнӑ.

— Шыраччӑрах халь, пурӗпӗр тупаймаҫҫӗ. Вӗсем ҫутӑ ҫутмасӑрах саланкаласа ҫывӑрма выртнӑ, анчах нихӑшӗ те ҫывӑрса каяйман. Иккӗшне те йывӑр шухӑшсем ҫавӑрса илсе—пӗр самантлӑх та канӑҫ паман. Мӗн пулать-ши малалла? Ыранхи кун тата мӗнле инкек килӗ-ши?

Анчах инкеке ыранччен те кӗтмелле пулман. Хурлӑхпа асап вӗсен пӳртне ҫав каҫах ҫӗмӗрттерсе ҫитсе кӗнӗ...

Ҫурҫӗр тӗлӗнче (Варвара Васильевнӑпа Петя кӑшт тӗлӗрсе кайма пуҫланӑ мӗн ун чух) сасартӑк такамсем ҫенӗк алӑкне чышкӑсемпе ҫапса, урисемпе тапса кисрентерме тытӑннӑ. Шакканӑ май, ӑнран тухса кайнӑ пекех кӑшкӑрнӑ хӑйсем:

— Уҫ часрах! Уҫ, большевик сысни!.. Уҫмасан халех вут тӗртсе ҫунтаратпӑр!

Шаккакансем урӑ маррине Варвара Васильевна тӳрех сиснӗ.

— Эппин, тата усалтарах пулаҫҫӗ... Хӑтӑлса юлассине шанма ҫук ӗнтӗ...

Петя хӑранипе сиксе чӗтӗренӗ.

— Ан уҫ, анне, ан кӳрт...—тенӗ вӑл, амӑшне аллинчен тытса.

— Юрамасть, ывӑлӑм, уҫмасан хамӑра тата йывӑртарах пулма пултарать... Эс ан хӑра, ан макӑр... Хӑвӑнтан ыйтма пуҫласан —ним те ан кала, ҫирӗпрех пул...—ӑс панӑ ӑна Варвара Васильевна. Хӑй ҫавӑнтах ҫенӗк алӑкне тухса уҫнӑ.

Самантранах пӳрт ӑшчиккине электричество хунарӗ ҫутатнӑ. Ҫутӑ пайӑрки пӳрте йӗри-тавра ҫаврӑнса Петя ҫине пырса ӳкнӗ, унтан вара Варвара Васильевна ҫине куҫнӑ. Куҫран тӑрук ҫутатнипе вӗсем хӑйсем пат-

не камсем килсе кӗнине те уйӑрса илеймен.

— Ҫут-ха лампуна, йӗксӗк, пирӗн санпа таса чӗререн калаҫмаллисем пур,—тенӗ килнисенчен пӗри.—Ӗлӗкхине те асӑнӑпӑр, хальхине те манмӑпӑр, ҫӑкӑр-тӑвара хире-хирӗҫ тӑвӑпӑр...

Темшӗн, Петьӑна ку сӑмахсене калаканни хӗрарӑм пулнӑ пек туйӑннӑ.

— Неушлӗ вара нимӗҫсен вырӑсла калаҫакан хӗрарӑмсем пулма пултараҫҫӗ? Ҫук, йӑнӑшрӑм пулӗ. Тепӗр чух ҫинҫе сасӑпа калаҫакан арҫынсем те пулаҫҫӗ вӗт...

Анчах та вӑл йӑнӑшман. Пӳрте ҫӗмӗрсе кӗнӗ виҫӗ нимӗҫпе пӗрле вырӑсла тумланнӑ пӗр ҫамрӑках мар хӗрарӑм пулнӑ. Каҫӑртарах сӑмсаллӑ, темле тискер куҫлӑ, тутисене хӗп-хӗрлӗ хӗретсе ларгнӑ нӗрсӗр хӗрарӑм пулнӑ вӑл. Петя палламан ӑна, анчах Варвара Васильевна хӑй лампа ҫутса ярсанах уйӑрса илнӗ: ку—1930 ҫулта раскулачить тунӑ Евстрат Пудов ятлӑ усламҫӑн кӗҫӗн хӗрӗ иккен...

— Ӑҫтан килсе тухма пӗлнӗ вӑл ҫавӑн чухлӗ ҫул иртнӗ хыҫҫӑн?—шухӑшланӑ Варвара Васильевна.—Ун чух ачисене хӗрхенгӗмӗр эпир, анчах халь вӗсем пире хӗрхенсе тӑрас ҫук...

...Винтовкӑсем тытнӑ икӗ нимӗҫ алӑк патне вырнаҫнӑ, тепӗр нимӗҫӗпе ҫав хӗрарӑм

сĕтелĕн икĕ пусне ларнă. Петя çаплах лăплanaймасăр, пĕрре пĕрисем çине, тепре теприсем çине пăха-пăха илнĕ.

— Мĕн тăваççĕ-ши ĕнтĕ? Хĕнеççĕ-ши? Персе пăрахаççĕ-ши?

Тутисене сăрланă хĕрарăм пирус чĕртсе янă та, Варвара Васильевна çине, пуçне хăяккăнтарах тытса, хăрах куçне хĕсерех пăхса, сăмахĕсене шăл витĕр сăрхăнтарса ыйтнă:

— Н-но, мĕнле пурăнкалатăн?

— Чун тухиччен пурăнас пулать...—хуллен кăна ответ панă Варвара Васильевна, чăлан çумĕнче çӳçĕсене тирпейлесе тăрса.

— Чунĕ пирки ан куллян, кирлĕ пулсан эпир ăна хамăрах кăларса ыватăпăр,—тенĕ хĕрарăм, пирусне ĕме-ĕме.—Ывăлусем ăçта санăн?

— Çынсен ăçта—манăн та çавăнтах,—каллех лăпкăн ответ панă Варвара Васильевна, хĕрарăм çине пăхмасăрах.—Ун çинчен мĕн ыйтмалли пур...

— Çапах та, тен каласа парăн?—тутисене çилĕпе пăркаласа илнĕ лешĕ.

— Вĕсем халь ăçтине, чĕрри-виллине хама кам та пулин каласа паринччĕ... Тем пекех тав тăваттăм эпĕ вăл çынна.

Хĕрлĕ туталлă хĕрарăм сĕтел çине чышкипе чант! тутарнă та сасартăк ялт! сиксе тăнă.

— Эсĕ! Ватă йытами! Эпир кунта санпа юмах ярса ларма килмен!—тесе кăшкăрса пăрахнă вăл.—Кала тӳррипе!

— Эпĕ нихçан та кукăр-макăр калаçман.

— Ну-ка, начальниксем умĕнче чипертерех тăрса калаç! Кил кунтарах! Каласа пар, ăçта сан ывăлусем? Хăш тĕлте пытанса пурăнаççĕ?—шăртланса ӳкнĕ пĕр чăсланкă нимĕçĕ.

— Каларăм-çке...

— Ним те каламарăн эс! Суятăн! Хăш ывăлу килте пулнă санăн паян ирхине?

— Ак çак пулса...—Варвара Васильевна вырăн çинче ни вилĕ, ни чĕрĕ ларакан Петя çине кăтартнă.—Урăх никам та пулман...

Хĕрарăм нимĕçпе темскер калаçса илнĕ. Лешĕ алăк патĕнчи салтаксенчен пĕрине сăмах хушнă. Салтак: „найн, найн!" тенĕ те пуçне пăркаланă. Хĕрлĕ туталлă хĕрарăмĕ вара сĕтел хушшинчен тухса, чышкисене чăмăртаса, Варвара Васильевна патне утса пыма пуçланă...

— Чăннипе калатăн-и эс, каламастăн-и, ватă стервă... Ăçта тартрăн ывăлна? Ирхине вăл кунтах пулнă, ак, салтак килсе курнă!

— Курнă пулсан—ма тытман?—кăштах хăюлланнă Варвара Васильевна...

— Ара, эс çапла калаçатăн тата?!

Чăсланкă нимĕç куçран тӳррĕн, çавтери

кураймасăр пăхса, шăлне çыртса тăракан Варвара Васильевнăна пур вăйран çупса янă.

— Вĕлеретĕп! Кала!

Ответ ырăнне ку пуçне пăркаланă çеç. Вара хĕрлĕ çӳçлĕ чăсланкă нимĕç пушшех урса кайнă. Варвара Васильевнăна вăл кăкринчен чышса чăлан çумнелле тăратнă та, кĕсъинчен пистолет кăларса, унăн пичĕ патнех илсе пынă.

— Вилессӳ килмест пулсан—кала, пурăнăçу йăлăхтарчĕ пулсан—хăвăн ирĕк! Ак çакăнта—сакăр пуля унта, сана пĕрре кăна кирлĕ. Ăнлантăн-и мана, ват сысна?

— Ăнлантăм,—тенĕ Варвара Васильевна шăппăн.

— Кала эппин хăвăнтан мĕн ыйтнине!— кăшкăрса янă тутине хĕретнĕ хĕрарăм.

— Эп... Эп нимĕн те пĕлместĕп... Никама та курман эпĕ.. Ĕненместĕр пулсан—ухтарăр, никам та çук ман патра.

Варвара Васильевнăн тутисем чĕтренĕ, сăнĕ шурса кайнă, чĕри сиксе тухас пек тапнă. Нимĕçсемпе çак кулак хĕрĕ ăна хăйне те, Петьăна та ним тытăнса тăмасăрах вĕлерме пултарасса пит лайăх пĕлнĕ вăл, анчах унăн шухăшĕсем çав вăхăтрах урăххи çине куçса кайнă. Вăл Хĕрлĕ Çарти икĕ ывăлне, вĕсем халь çак урнă йытăсене хирĕç çапăçнине аса илнĕ. Ун куçĕ умне ĕнер

kaçхине аманса юнланса пĕтнĕ йĕкĕт епле килсе кĕни тухса тăнă... Çак самантра ак вăл тĕттĕм те нӳрĕ шăтăкра выртать, çамрăк, хĕрӳ чĕреллĕ, кунти çĕршыва хӳтĕлеме инçетри Атăл çинчен килнĕскер. Епле калаcа пама май пултăр вара ун çинчен? Çук, çук, нихçан та, ним тусан та..

Хыткан та чăсланкă нимĕç икĕ утăм каялла чакса тăнă та, ăна пистолетпа тепĕр хут тĕллеме тытăннă. Ерипен, васкамасăр тĕлленĕ вăл. Шăлĕсене çыртса, тутисене йĕрĕнчĕклĕн чалăштарса...

— Юлашки хут ыйтатăп... Ăçта пытартăн ывăлна? Ăçта тартрăн? Камсемпе çыхлантарса ятăн? Ну?

Варвара Васильевна урăх нимĕн те чĕнмен. Вăл пистолет кĕпçи хăйĕн çамки тĕлнелле çĕкленнине, тискер этем сулахай аллипе хăйне пилĕкĕнчен тытса, сулахай куçне хĕссе тĕлленине, сутăнчăк хĕрарăмăн йĕрĕнчĕклĕ сăнне курнă. Пĕр самантлăха Петьăн хăрушла чарăлса кайнă куçĕсем, вăл кăшкăрма хатĕрленсе çăварне карни курăнса кайнă, унтан сасартăк пĕтĕмпех хупланнă. Пӳртре пăшал сасси кĕрслетнĕ...

Варвара Васильевна урайне ӳкнĕ. Урăх вăл нимĕн те туйман, нимĕн те илтмен, нимĕн те курман.

Майĕпе тăна кĕрсе, ерипен куçĕсене уçнă

чух чӳречесем витӗр кӑвак сутӑ сапнӑ пулнӑ ӗнтӗ. Вӑл урай варринче, йӑпӑлка сӑра юн синче выртнӑ Пус вӗсӗнче Петя макӑрса ларнӑ.

Леш нимӗс ӑна тивертмелле пемен иккен, ӑна епле пулсан та парӑнтарас тесе, хӑратмалла сес персе янӑ. Анчах та Варвара Васильевна тӑнсӑр пулса ӳкнине, паян вӑл текех каласма пултарас суккине курсан, тарӑхнипе урса ситнӗскер, ӑна калама сук тискеррӗн хӗнесе тӑкнӑ. Пистолет аврипе сапа-сапа пусне темисе сӗртен шӑтарнӑ, атӑ кӗлипе тапа-тапа питне-кусне сӗмӗрсе пӗтернӗ, хӑй сине хӑпара-хӑпара сикнӗ. Саксене курса, Петя амӑшӗ хутне кӗме пикеннӗ, анчах пӗр нимӗсӗ ӑна тытса кӗтеселле савӑрса сапнӑ та, вара вӑл та тем вӑхӑтченех пӗлми пулса выртнӑ...

Петя пулӑшнипе Варвара Васильевна аранаран вырӑн сине хӑпаркаланӑ. Вӑл халь йынӑшмасӑр алли-урине те хускатайман. Ӑна пӗсертсе пӑрахнӑ, вӑл кӑшгах тӗлӗрсе кайнӑ пек пулнӑ хыссӑн кусӗсене уссан, кашнинчех ывӑлӗнчен шыв ыйтнӑ. Сапах та, хӑй сав тери асапланса аран сывласа выртнӑ пулин те, касалла сулӑнсан Петьӑна хӑй сывӑхнерех чӗнсе илсе, ӑна хуллен кӑна:

— Лешин патне кайса килетӗн пуль, ывӑлӑм, — тенӗ.

Петя тăрукках ăнланайман.

— Ăҫта, анне?

— Окопа, салтак патне... Епле вăл унта... чĕрĕ-и, сывă-и? Килсе пăрахрĕҫ та—мансах кайрĕҫ, тейĕ тата... Хамăр ҫын вĕт, темле пулсан та пулăшас пулать... Чăланта, сунтăк ăшĕнче, икĕ пашалу пурччĕ, пĕрине леҫсе пар. Хамăр патра мĕн пулнине ан кала—чирлĕ ҫынна пăлхантарни сиенлĕ вăл... Кăна пĕлсен, тухса кайма шут тытĕ тата. Кала: май килсенех шанчăклă вырăна ăсатăпăр... Шансах тăтăр...

— Юрĕ, анне,—тенĕ те Петя, тумланма тытăннă. Варвара Васильевна малалла хăй тĕллĕн калаҫнă пек калаҫса выртнă.

— Пире вĕсем хĕнениие парăнтарма пулать, теҫҫĕ пуль... Ухмахсем! Хăйсене хирĕҫ тата вăйлăрах кĕрешме вĕрентеҫҫĕ кăна вĕт...

Ывăлĕ тухса кайсан та вăл ҫавăн ҫинченех шухăшласа выртнă.

— Кăкăртан юлашки сывлăш тухиччен те парăнассăм ҫук, урапан ура иртми пуличчен те тавăрма пăрахассăм ҫук халь эп вĕсене!..

* * *

... Ку хăрушă повеҫĕн юлашки пайне Варвара Васильевна пире хăй каласа пачĕ. Чун

çӳçенчĕ, çурăм çиве сив тар тухрĕ ăна итлесе ларнă чухне.

— Темиçе талăк выртрăм эпĕ вырăн çинчен тăраймасăр,—терĕ вăл,—вуçех те сывалаймастăп пулĕ, тесеттĕм. Кашни ӳсĕрмессеренех пыртан юн муклашкисем тухса ӳкетчĕç. Ӳпкене хускатнă пулмалла вĕсем манне... Анчах çав хушăрах ку пĕрре те асран тухмарĕ... (Вăл пуçĕпе Палюков еннелле сулчĕ). Ман Петя кашни каçах кайса тăчĕ ун патне, çимеллисем леçрĕ. Кӳршĕсенчен мана валли тесе сĕт тупкаласа килетчĕ те, ăна кайса паратчĕ... Çапах та, пĕрмаях кун пек пулса пыма пултарайман-çке-ха. Çанталăк та сивĕтме пуçларĕ. Чăнах та, эпир ăна витĕнсе выртмаллисем паркаланăччĕ ĕнтĕ, анчах сивĕрен пĕр унпа çеç çăлăнса пурăнаймăн. Вара эпĕ ăна çапла хушрăм: Лукинкăри аппусем патне кай та тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пар, вĕсем ăна—Мишăна ĕнтĕ—хăйсем патне илсе ăшăрах çĕре пытарччăр, терĕм. Ачи ман, итлекенскер, сăмахсăрах килĕшсе тухса кайрĕ. Кайрĕ те—çухалчĕ. Икĕ талăк кĕтрĕм эпĕ ăна. Тем тĕрлĕ те шухăшласа пăхрăм, чĕре çурăлсах тухатчĕ. Хăвăрах ăнланмалла ăна... Юлашкинчен, таврăнчĕ вăл. Савăнтарсах ячĕ: Мишăна илсе кайрăмăр, терĕ, аппасем ăна шанчăклă çынсем патне ăсатма пулчĕç, терĕ.

Кайран, чылай вăхăт иртсен тин пĕлтĕм: ăна партизансемпе явăҫтарса янă иккен...

— Тавах вĕсене уншăн,—пуҫĕпе сулса илчĕ Палюков,—питĕ лайăх пулчĕ вăл. Каллех алла пăшал тытса нимĕҫсене шĕкĕлчеме май килчĕ...

— Ăна пĕтĕмпех Петя турĕ ĕнтĕ, вăл пулман пулсан—нимĕн тума та пулмастчĕ...— Варвара Васильевна темшĕн хаштах сывласа ячĕ.—Питĕ маттур ачаччĕ вĕт...

— Ма апла калатăр? Халь ҫук-им вара вăл?—хăраса ыйтрĕ Палюков.

Варвара Васильевнăн куҫĕсем тăруках шывланса кайрĕҫ, унтан пĕркеленнĕ питҫăмартисем тăрăх шултăра куҫҫулĕсем шăпăртатса юхса анчĕҫ.

— Пĕлместĕр-им эсир мĕн пулнине?

— Ҫук... Эпир паян ҫеҫ килнĕ-ҫке...

Варвара Васильевна тарăнăн сывласа илчĕ те тутăр вĕҫĕпе куҫҫулĕсене шăлса типĕтрĕ.

— Ҫук ҫав ман Петя... Чунне илчĕҫ унне нимĕҫсем...

— Епле пулчĕ вăл? Каласа парăр тархасшăн,—ыйтрĕ Палюков, сăнран улшăнса кайса.—Петя маншăн тăван шăллăмран та хаклăрах пулнă вĕт, вăл ман пурăнăҫа ҫăлнă. Манăн халь уншăн нимĕҫсене вунă хут ытларах тавăрас пулать...

— Епле пуласси...—терӗ те Варвара Васильевна, каллех пӗр вӑхӑт шарламасӑр ларчӗ. Ыгла та йывӑр пулчӗ пулмалла ӑна иртнӗ хура кунсене тата хӑйпе пӗрле пурӑннӑ юратнӑ ачине ҫухатнине аса илме. Хӑй вӑйлӑ чӗреллӗ, хуҫӑлми ҫирӗп кӑмӑллӑ ҫын пулнипе кӑна тепӗр хут макӑрса ямарӗ пулас вӑл. Хӑйне алла илчӗ те—лӑпкӑ, тикӗс сасӑпа каласа пама пуҫларӗ...

— Малтанах эпир Петьӑпа иксӗмер таҫта тӗпсакайӗнче пурӑннӑ пекех пурӑнтӑмӑр.. Ниҫта тухса ҫӳремен, никампа хутшӑнман. Хамӑр пата та никам та килместчӗ. Ун чух ялти ҫынсем нимӗҫсен куҫӗ тӗлне пулас мар тесе, шыв патне кайма та хӑратчӗҫ. Эпӗ тата хама нимӗҫсем хӗнесе тӑкнӑ хыҫҫӑн сывалса та ҫитейменччӗ-ха, аран ҫӳрекелеттӗм. Пӗтӗм ӗҫсене Петя туса пыратчӗ,—вут татасси, шыв кӳресси... Нихҫан лампа ҫутса курман эпир, тӗттӗмленме пуҫласанах алӑксене питӗрсе кӑмака ҫине хӑпараттӑмӑр та, вырта-аттӑмӑр вара шӑппӑн каласса. Кашниччех аслӑ ывӑлсене аса илеттӗмӗр: ӑҫташи халь вӗсем? чӗрӗ-ши? сывӑ-ши? хӑҫан киле ҫавӑрӑнса килӗҫ-ши? нимӗҫсене хӑҫан хӑваласа ярӗҫ-ши? пире хӑҫан ирӗке кӑларӗҫши?.. Ку Мишӑна та час-часах асӑнаттӑмӑр... (Варвара Васильевна Палюков ҫине ҫавтери кӑмӑллӑн пӑхса илчӗ). Пӑшӑрханаттӑмӑр

ун пирки: епле-ши, ҫăлăнайрĕ-ши, суранĕсем тӳрленчĕҫ-ши?—теттĕмĕр.

— А эпĕ ун чухне нимĕҫсене во-всю ҫĕмĕрме тытăннă ĕнтĕ...—ҫемҫен кулса илчĕ Палюков.

— Ун ҫинчен эпир кайран тин пĕлнĕ-ҫке... Хамăр пата ҫитекен хыпарсем пĕринчен теприхăрушăрахчĕ. Вĕсене Петя, йăпăрт шыв ăсма тухсан е ăнсăртран хăйĕн юлташĕсене тĕл пулсан, пĕлсе пыратчĕ. Мĕн кăна хăтланмастчĕҫ пуль вăл шуйттансем, мĕн тĕрлĕ ашкăнмастчĕҫ пуль!.. Ну, ун ҫинчен сире калама та кирлĕ мар, эсир ăна хăвăрах аван пĕлетĕр, сахал мар куртăр пулĕ икĕ ҫул хушшинче. Анчах пĕр япалана ниепле те манса каймастăп эпĕ... (Варвара Васильевна татах йывăррăн сывласа илчĕ). Пĕр агроном ҫемьи пуранатчĕ пирĕн ялта. Хăи вăл коммунист пулнă. Такам усалĕ нимĕҫсене ҫав агроном партизанра ҫӳрет, тесе каласа панă. Вара кусем унăн арăмне комендатурăна сĕтĕрсе кайса кунĕн-ҫĕрĕн допрос тума тапратнă. Ну, вĕсем допроссене епле меслетсемпе тунине пурте пĕлеҫҫĕ ĕнтĕ... Асаплантара-асаплантара ҫын йĕркинчен кăларсан, лешĕ калаҫайми-утайми пулса ҫитсен, килне леҫсе янă. Анчах темиҫе кунранах ун патне ҫич-сакăр ӳсĕр нимĕҫ сĕм-ҫĕрле пырса ҫемĕрсе кĕнĕ те, ăна хăйне те, ачисене те

çĕрĕпех çухăртнă. Нимĕççем çĕр каçа вĕсене мĕнле асаплантарнине никам та пĕлмест. Тепĕр икĕ кунран тин кӳршĕсем кусен пӳрт алăкĕ ярах уççине асăрхаса шала кĕрсе пăхнă та—нимĕççем мĕн туса хăварнине курнă вара... Агроном арăмĕн икĕ кăкрине те касса илнĕ вĕсем, ачисенне хăшинне халхисене, хăшинне сăмсине касса татнă, хырăмĕсене унтан та кунтан çĕçĕсемпе чиксе пĕтернĕ пулнă. Анчах ку та киллентерсе çитереймен курăнать вăл урнă йытăсене... Çавнашкал асаплантарса, мăшкăлласа вĕлерсе пĕтернĕ хыççăн, пурне те мачча каштинчен çакса хăварнă. Сăпкари ачине те пулин вĕлерсе, çакса хăварнă вĕт, чуниллисем!..

— Çакна пĕлнĕ хыççăн эпĕ темиçе каç çывăраймарăм, ăнран тухса кайнă çын пек пурăнтăм,—терĕ малалла Варвара Васильевна.—Пĕр енчен агрономăн çемьине хĕрхеннипе, тепĕр енчен—хамăра та çавăн пек туса каясран хăраса... Халăх хушшинче çакăн пек сăмах çӳреме пуçларĕ: леш Пудов кулакăн хĕрĕ нимĕççене колхозра, советра активлăн ĕçленĕ çынсен спискине туса панă, тет ге, çитес виçĕ уйăх хушшинче вĕсен çемьисене пурне те вĕлерсе пĕтермелле, тет... Паллах, ун пек сăмаха илтсен эпĕ лăпкăн пурăнма пултарайман, кашни кунах кĕтеттĕм хамăн пуç çине çĕнĕ инкек йăтăнса анасса...

Пĕр ҫил-тăманлă каҫхине вара, ҫурҫĕр иртсен, чĕре те тапма чарăнчĕ: ак ҫак килхушши енчи чӳречерен такам тăкăр тăкăр! тутарчĕ.

„Килчĕҫ хайхискерсем, тинех пĕтрĕмĕр",— терĕм...

Шакканине лайăхах илтнĕ пулин те, сас памарăм. Кăшт тăхтасан, кантăка каллех хуллен кăна тăкăртаттарчĕҫ. Тĕлĕнтĕм: мĕншĕн-ха кун пек кăна шаккаҫҫĕ? Нимĕҫсем пулсан, вăтанса тăрас ҫук-ҫке, тӳрех ҫĕмĕрме тытăнмалла. Е пăштăн кĕрсе пусса тухса каясшăн-ши кусем пире?.. Татах чĕнмерĕм. Виҫҫĕмĕш хут шаккасан тин кăмака ҫинчен анса чӳрече патне пытăм та, кантăк витĕр пăхрăм. Урамра ҫăмлă ҫĕлĕк тăхăннă ҫын пуҫĕ мĕлтлетнине куртăм.

— Кам эсĕ?—тесе ыйтрăм хуллен.

— Варвари инке, кӳрт-ха, ют ҫын мар ку, эпĕ,—терĕ вăл. Сассине уйăрса илеймерĕм пулин те, хама ятпа чĕннине пула, уҫса кӳртрĕм. „Ют ҫын пулсан та—нимĕҫех марха ку",—терĕм ĕнтĕ.

— Эпĕ ку, Сашка,—терĕ хайхискер, пӳрте кĕрсе тăрсан.

Тĕлĕнсе хытсах кайрăм. Ку—ман упăшка пиччĕшĕн ывăлĕ пулнă мĕн. Вăрҫăччен вăл хамăр станцири депора маҫтăр пулса ĕҫлетчĕ, вăрҫă пуҫлансан та ăна ҫавăн пиркиех

салтака илменччĕ. Халь вăл ман пата нĕлĕт çинчен ӳкĕ пекех килсе кĕчĕ.

— Эсĕ ăçтан йăтăнса антăн? Епле майпа?—тĕпчеме тытăнтăм çакăнтан.

— Ыйтиччен малтан эс ăшăт-ха мана,— терĕ вăл,—патрульсем иртсе кайиччен карта çумĕнче пĕр сехет выртрăм пулĕ, малтан хытă килсе тарланăскер, ĕнтĕркесех кайрăм,—терĕ.

Чăнах та, вăл сиксех чĕтĕрет иккен. Эпĕ ăна часрах кăмака çине хăпарма хушрăм. Унтан хам та унпа юнашар хăпарса лартăм та, вăл пире пĕтĕм историне каласа пачĕ. Хамăрăн çарсем станцирен чаксанах, депори рабочисем, пуринчен ытла çамрăккисем, партизана кайнă иккен. Малтан отряд пысăк пулман, анчах икĕ уйăх хушшинче пит те ӳссе кайнă. Кулленех çĕнĕрен çĕнĕ çынсем пынă вĕсем патне: рабочисем, служащисем, колхозниксем, арçынĕсем те, хĕрарăмĕсем те, ваттисем те, çамрăккисем те—тĕрлĕренех. Кам нимĕççен „ырлăхне" лайăхрах тутанса пăхнă—пурте партизансем патнелле туртăннă.

— Тĕрĕс çав,—сăмах хушрĕ кунта Палюков,—отряд тĕлĕнмелле хăвăрт ӳссе пычĕ ун чух...

— Эс те çав отрядра пулнă-и вара?—тĕлĕнсе ыйтрăм эпĕ.

— Чим-ха, чим,—терĕ Варвара Васильевна, —ун çинчен те калă-ı. Саша хăйсем епле пурăнни çинчен, мĕн-мĕн тунисем çинчен каласа пĕтерсен, манран сасартăк: пĕр-ик уйăх каялла эсĕ пĕр аманнă красноармееца, чăваш ачине пытарса усранă-и?—тесе ыйтрĕ.

— Ма вара?—терĕм эпĕ.

— Эсĕ кала... Пулнă-и ун пек ĕç?—çаплах ыйтрĕ Саша.

— Ну, пулнă... А эсĕ ăна ăçтан пĕлетĕн?

— Салам калама хушрĕ вăл сана.

Унччен, Саша килсе кĕнĕ пирки тĕлĕннинчен те ытларах тĕлĕнсе кайрăм куна илтсен.

— Ăçта тĕлпултăн эсĕ ăна?

— Пĕрмаях пирĕн отрядра пулчĕ вăл, питĕ маттур партизанччĕ, анчах пĕр заданине кайсан каллех аманчĕ те, ăна эпир самолётпа „Пысăк Çĕр“ çине ăсатрăмăр,—терĕ Саша.—Сана пĕрмай асăнатчĕ, сывă пулсан, хăçан та пулин килсе тав тума ĕмĕтленетчĕ.

— Тĕрĕс, вăл чăн та çапла пулнă...—пуçĕпе сулса илчĕ Палюков, хĕрарăм çине кăмăллăн пăхса.

— Ку вара калама çук савăнтарса ячĕ,—терĕ те Варвара Васильевна, унăн сăнĕ те çутăлса кайрĕ пĕр вăхăтлăха.

— Сашши хăй нумай вăхăт пулчĕ-и сирĕн патра?

— Çук, ир енне тухса кайрĕ. Вăл ман пата ĕçпе килнĕ пулнă... Партизансен кĕпи-йĕмĕсем хуралса çитнĕ, анчах вăрманта çума май килмен. Вара вĕсем таврари ялсенчи ман йышши хĕрарăмсемпе калаçса татăлма шут турĕ. Паллах, эпĕ тӳрех, сăмахсăрах килĕшрĕм. Кайрантарахпа çăкăр пĕçерттерме пуçларĕç. Пĕр-пĕр тĕттĕм каç çăнăх килсе парĕççĕ те, пĕр-икĕ кунран килсе çăкрине илсе каяççĕ. Ĕçĕ пысăках мар ĕнтĕ ку, çапах та хама пысăк ĕç тунă пекех туйăнатчĕ. „Нимĕçсене хирĕç кĕрешес ĕçе эпĕ те хутшăнатăп",—теттĕм. Пуринчен ытла, партизансем унта капла тунă, кунта апла тунă, тенине илтсен пит савăнаттăм вара...

Çапла чылай вăхăт иртрĕ. Пĕринче Саша тепĕр партизанпа пĕрле çăкăр илме килчĕ те, ҫемшĕн ман сывлăх çинчен, вăй-хал çинчен ыйтма пуçларĕ. Аптрамастăп-ха, терĕм. Вара вăл мана хулари вăрттăн ĕçлекен коммунистсене тĕрлĕ „хаклă йышши çимĕç" леçсе тăма сĕнчĕ. Çаплах каларĕ: „нимĕçсене тăрантармалли хаклă йышши çимĕç", терĕ. Эпĕ вăл мĕн çинчен каланине тӳрех ăнлантăм.

— Таварне çунашкапа туртса каймалла пулать,—терĕ Саша. Халь, вĕт, çулсем тă-

рăх çунашкасем туртса çӳрекенсем нумай. Кăштах çăнăх, кăштах çĕрулми, сухан хураççĕ те — унта та кунта тăварпа, краççинпа, йĕп-çиппе улăштарма каяççĕ. Санăн та çавăн пекех çӳремелле пулать. Анчах сан çăнăху ăшĕнче тимĕртен тунă „хуплусем“ пулаççĕ. Ĕçĕ ытла канлех мар ĕнтĕ, анчах асăрханарах ĕçлесен — хăрамаллиех çук. Тумланасса чухăнтарах тумланан...

Эпĕ килĕшрĕм. Саша мана ĕçе мĕнле тумаллине, ăçта çитсен мĕн каламаллисене питĕ тĕплĕн ăнлантарса пачĕ. Ик кунтан вара эпĕ çунашка туртса хулана кайрăм. Çул çинче мешочниксем чăнах та нумай иккен. Кăшт кайсанах пĕр старикпе пĕрлешрĕм те, унпа пĕрле хулана чиперех çитрĕм.

Каç пулнăччĕ. Унта та кунта мăшăрăн-мăшăрăн нимĕç салтакĕсем çӳретчĕç. Тӳрех вĕсен куçĕ тĕлне пулас мар, тесе, эпĕ хӳмесем çумĕперех йăпшăна-йăпшăна кайса, тепĕр çур сехетрен Саша каласа янă çурта шыраса тупрăм. Вăл хушнă пекех, сулахай енчи чӳречерен туя вĕçĕпе тăватă хутчен шаккаса илтĕм. Кĕçех мана хирĕç урама пĕр ватă хĕрарăм тухрĕ.

— Мĕн кирлĕ сана?

— Тăлăх карчăка çĕр выртма ямăр-ши? — терĕм.

Вара вăл мана килхушшине илсе кӳртрĕ

те—пуçĕпе ман çунашка еннелле сулса: „Мĕнле тавар илсе килтĕн?"—тесе ыйтрĕ.

— Алламан çăнăх,—терĕм.

Текех вăл манран ыйтса тăмарĕ, мĕншĕн тесен Саша хушнисене эпĕ йĕркипех каласа пытăм. (Кайран вăл сăмахсене манăн темиçе хут та каламалла пулчĕ—хулана кашни пымассеренех çавнашкал „алламан çăнăх илсе килтĕм", теттĕм. Ку сăмах партизансемпе хулари коммунистсен вăрттăн сăмахĕ пулнă вăл).

— Çапах та, мĕн турттарнă вара эсир унта, Варвара Васильевна?—тесе ыйтрăм эпĕ, унăн ĕçĕ çинчен тĕплĕрех пĕлес шутпа.

Вăл çемçен кăна кулса илчĕ.

— Каларăм вĕт: „тимĕр хуплусем"... минăсем. Нимĕçсен машинисем сахал мар сывлăшалла сикнĕ вăл „хуплусене" пула. Саша каласа паратчĕ мана кайран. Савăн, Варвари инке, хуларисем ĕнер нимĕçсене каллех сан кучченеçÿсемпе чыхăнтарнă, тетчĕ... Пурĕ хулана эпĕ вунпилĕк хут кайса килтĕм. Кашнинче виçшер мина илсе кайнă пулсан та, нимĕçсене хирĕç вăрттăн ĕçлекенсем валли эпĕ 45 мина çитерсе панă. Ĕç питĕ аван пыратчĕ. Анчах çур енне, партизансем питĕ йышланса нимĕçсене пур çĕрте те сиен тума тапратсан, вĕсем çул çинчи кашни çынах тыта-тыта тĕрĕслеме пуçларĕç. Çавăн

чух тытрĕç те вара мана вĕсем... (Варвара Васильевнăн сăнĕ тăруках хаярланса тĕксĕмленчĕ).

— Хулана çитесси нумай та юлманччĕ. Аякранах куртăм: кĕпер патĕнче иккĕн тăраççĕ... „Мĕн кĕтсе тăраççĕ-ши кусем?" тетĕп. Хамăн чĕре тем ыра мар пуласса сисрĕ, темле хăвăрт-хăвăрт тапма тытăнчĕ. Кĕпер патнерех çитсен—уççăнах уйăрса илтĕм: иккĕшĕ те—нимĕç, кĕске пăшалĕсене мăйĕсенчен çакса янă. Каласан тĕлĕнмелле, хама-хам лăплантарма тытăнтăм çавăнта: „Ан хăра, нимĕн те пулмасть", тетĕп...

— Погодить, стоять!—терĕ пĕр нимĕçĕ, эпĕ вĕсемпе танашсан.—Показайт паспорт!

Эпĕ тӳрех хĕврен нимĕçсем хăйсем панă выльăх паспортне кăларса патăм.

— Номьер!

Эпĕ сăхман çухавине вĕçертсе мăй çинче çакăнса тăракан хăма таткине кăтартрăм.

— Асмонь ..—тесе вуларĕ пĕр нимĕçĕ номер çине çырнă ял ятне. Тепри паспорт çине пăхса илчĕ те, пуçĕпе сулса:

— Я, я,—терĕ. Ку ĕнтĕ „çапла, çапла", тенине пĕлтерчĕ. Ну, хăгăлтăм, хăрушлăх иртсе кайрĕ, терĕм хам ăшăмра, анчах та савăнма ытлашши васканă мĕн эпĕ. Пĕр нимĕçĕ çунашка патне пычĕ те, урипе миххе тапрĕ.

— Что везьет? Зачем?

— Ҫӑнӑх илсе каятӑп, ӑҫта та пулин тӑварпа улӑштарас, тетӗп...

Нимӗҫ йӑпӑр-япӑр алшишне хывса пӑрахрӗ те, миххе ҫара аллӑн хыпашлама тапратрӗ. Вӑл михӗре темле хытӑ япала пуррине сисрӗ пулмалла: юлташне темскер каларӗ те, ҫавӑнтах михӗ ҫыххине ҫӗҫӗпе татрӗ, вара шинель ҫаннине чавси таран ҫӗклесе, аллине ҫӑнӑх ӑшне чиксе ячӗ. Манӑн куҫсем хуралса килчӗҫ, ура ҫинче аран тытӑнса тӑтӑм... Нимӗҫ михӗрен мина туртса кӑларчӗ... Иккӗшӗ те пӗр харӑс кӑшкӑрса ячӗҫ... Пӗри мана автомачӗпе тӗллерӗ, ҫав самантрах тепри чукмар пек сулӑмлӑ чышкипе пуҫран ҫапса ӳкерчӗ.

— Зобак! большевик! смерть!—тенине ҫеҫ илтрӗм эпӗ.

...Унтан вӗсем мана васкасах хулана илсе кайрӗҫ. Эпӗ темле ҫӑра тӗтре ӑшӗнче пынӑ пек утса пытӑм. Вӑхӑтран-вӑхӑта хама ҫурӑмран пӑшал кӗпҫисемпе тӗкнине тата чӗре сиксе тухас пек тапнине ҫеҫ туйрӑм. Ҫук, эп нимрен те хӑрамастӑп. Маншӑн халь пурӗпӗр: хӗнеҫҫӗ и, вӗлереҫҫӗ-и... Каҫару пулас ҫук, мана вӗсем минӑсемпех тытрӗҫ, ӑна хирӗҫ нимӗн те тупса калама май ҫук. Пуҫра пӗр шухӑш кӑна вӗресе тӑрать. Епле пулсан та парӑнас марччӗ, вӗҫне ҫитиччене ҫирӗп

пуласчӗ, пӗр сӑмах та калас марччӗ тӑшмансене, ним те пӗлтерес марччӗ вӗсене... Вӑй ҫиттӗрех, чӗре ҫирӗп пултӑрах!—терӗм хам ӑшӑмра.

— Малтанах вӗсем мана тӗттӗм те сивӗ подвала чышса кӳртсе ячӗҫ. Эпӗ, ыванса ҫитнӗскер, кӑшт та пулин ларса канас шутпа, сак тавраш ҫук-ши, тесе, хыпашлама пикентӗм. Анчах малалла пӗр-икӗ утӑм ярса пуссанах темле ҫемҫе япаларан такӑнтӑм. Мӗн ку? Кукленсе хыпашласа пӑхрӑм та—манӑн пӗтӗм шӑмшак сӑрлатса илчӗ. Урайӗнче, тӗттӗм ҫӗрте, этем кӗлетки выртать иккен. Кам кунта? Кам эс?—тесе темиҫе хутчен ыйтрӑм. Пӗр минут пулӗ сывламасӑр тӑтӑм. Мана хирӗҫ ответ пулма мар—ҫав ҫын сывлани те илтӗнмерӗ. Вӑл вилӗ иккен... Эп.. часрах тепӗр еннелле сиксе ӳкрӗм, анчах каллех тепӗр виле ҫине пырса тӑрӑнтӑм. Каялла чакма тӑрсан тагах такамӑн алли е ури ҫине пусрӑм... Подвал тулли виле выртать иккен. Мана вилесем патне килсе чикнӗ... Аран-аран стена патне ҫитсе тайӑнтӑм та, куҫсене хупрӑм.

— Чӗрӗллех пытарчӗҫ пулать... Ку чул шӑтӑкран тухас ҫук ӗнтӗ эпӗ... Текех хӗвел ҫутиве курас ҫук,—терӗм. Ӑш пӑтранма пуҫларӗ манӑн, пуҫ кашлама тапратрӗ... Тем вӑхӑт тӑнӑ вара эпӗ ҫавӑн пек—пӗлместӗп.

те тăна çухатнă, те пĕртакках тĕлĕрсе кайнă. Сасартăк куçран вăйлă çутă пырса çапрĕ. Картах сикрĕм те—хама электричество хунарĕпе çутатнине куртăм. „Тух!“—терĕ хулăм сасă. Тахăшĕ алăран тытса туртрĕ, унтан ĕнсерен чышрĕ. Эп ним туймасăр, ним çинчен те шухăшлама пултараймасăр утрăм...

Таçтан-таçтан, темле кукăр-макăр пусмасем, тĕттĕм коридорсем тăрăх çавăрса çӳресе, мана пĕр пысăках мар пӳлĕме илсе пычĕç. Пӳлĕменче çап-çутă электричество çунать,—тĕттĕмрен пынăскер, эпĕ пĕр вăхăт пăхма та пултараймарăм. Куçсем кăштах хăнăхсан тин куртăм: мăн сĕтел хушшинче икĕ „тимĕр хĕреслĕ“, сарă уссисене çӳлелле пĕтĕрсе хăпартнă самăр нимĕç офицерĕ ларать, сĕтел пуçĕнче—хайхи хамăр ялти Пудов кулак хĕрĕ, мана иртнĕ кĕркунне хам килтех ним пĕлми пуличчен хĕнесе хăварни, вырнаçнă. Иккĕшĕ те ман çине шуйттан çине пăхнă пек пăхаççĕ.

Салтак мана çурăмран тĕксе сĕтел умнех илсе пычĕ. Эпĕ чул пек хытса тăтăм.

— А а! Хамăр ял!..—терĕ те Парашка (Пудов хĕрĕ çапла ятлăччĕ вăл), пĕветнĕ тутисене йĕрĕнчĕклĕн чалăштарса кулса илчĕ.—Каллех тĕл пултăмăр эппин? Э?

Эпĕ ним те чĕнмерĕм.

— Ну, ку расра тĕпĕ-йĕрĕпех каласа па-

ратӑн пуль ӗнтӗ, мӗншӗн тесен тунма та, кутӑн чакма та май ҫук. Сана куҫкӗретӗнех тытнӑ ав...

Хӑй вӑл манран та ытларах пӑлханать пулас. Сӑмахне каласа пӗтерне-пӗтерменех ҫӑварне пирус хыпса чӗртсе ячӗ.

— Ну, пуҫла... Ним пӑркаланмасӑр, йӗркипе кала!

Эп малтанхи пекех ним чӗнмесӗр тӑтӑм. „Ах, ма типӗтмен-ши элир сана вӑтӑрмӗш ҫулта?"—тесе шухӑшларӑм хам.

Ҫапла пӗр минут иртрӗ, иккӗ иртрӗ. Вӗсем ман ҫине пӑхрӗҫ, эп—вӗсем ҫине. Пӗрнепӗри ҫисе ярас пекех ӗнтӗ. Унтан Парашкӑпа нимӗҫ пӗр-пӗрин ҫине пӑхса илчӗҫ. Нимӗҫ пуҫӗпе сулчӗ. Вара Парашка сасартӑк пирусне сӗтел ҫине пусса сӳнтерчӗ те, аяккарахра тӑракан пукана илсе мана лартса пачӗ.

— Чипер, йӗркеллӗн калаҫар-ха,—терӗ.— Лар!

Ывӑнса ҫитнӗскер, эп тиркесе тӑмарӑм, лартӑм. „Хӑтланӑрах, хуть те мӗнле чееленӗр, ҫапах нимӗн те пӗлес ҫук эсир манран..." терӗм хам ӑшӑмра.

Парашка каллех пӗр-ик минут хушши мана куҫран тӳррӗн пӑхса ларчӗ, ман чӗрере мӗн пуррине курма тӑрӑшнӑ пекех пӑхрӗ, унтан ҫемҫен кулса иленҫи пулчӗ те, темиҫе хутчен пуҫне пӑркаласа илчӗ.

| Тӗлӗнетӗп эпӗ санран...—терӗ вӑл.— Мӗн хӑтланатӑн эсӗ, мӗн ухмахланатӑн? Камсем хыҫҫӑн каягӑн?.. Неушлӗ вара эс нимӗҫсене ҫӗнтерме май пур, тетӗн? Текех вӑл нихӑҫан та пулас ҫук, нимӗҫсене кунтан халь тин никам та каялла хӑваласа яма пултарас ҫук... Ҫавӑнпа та вӗсене хирӗҫ тӑни—пӗр усӑсӑр япала вӑл. Харпӑр-хӑйӗн пурнӑҫне пӗтерни ҫеҫ пулса тухать. Ак, эсӗ лекрӗн вӗт ӗнтӗ, темле хӑтӑлас тесен те хӑтӑлма пултарас ҫук, сана хӑвӑн тусусем те ҫӑлас ҫук... А вӗт санӑн ывӑлу пур, санӑн ӑна пӑхса ӳстерес пулать. Ывӑлушӑн тӑрӑшас вырӑнне, эс ӑна тӑлӑха хӑваратӑн халь... Кам пӑхать ӗнтӗ ӑна сансӑр? Пӗтет вӗт, ҫын пулаймасть тин, э?

Парашка самантлӑха чарӑнса тӑчӗ. Хулпуҫҫи урлӑ нимӗҫ ҫине пӑхса илчӗ. Лешӗ малтанхи пекех, чул пек хытса, нимӗн те чӗнмерӗ, пуҫӗпе хуллен тайрӗ ҫеҫ. „Ӑнлантар малалла",—терӗ пулас.

А эпӗ: „Лӑпӑртатӑрах, ухмах тӗлне пултӑмӑр тетӗр пулсан",—шухӑшларӑм хам ӑшӑмра. Ҫавантах пуҫа каллех паҫӑрхи шухӑш ҫавӑрӑнса пычӗ:

„— Ах, ма тирпейлемен-ши эпир сана вӑтӑрӑмӗш ҫулта?"..

— Ну, мӗн тума шутлатӑн ӗнтӗ?—ыйтрӗ Парашка.

— Эп шутланинчен мĕн усси?—терĕм çакна.—Пурпĕрех вĕлеретĕр вĕт.

Вăл йĕрĕнчĕклĕн кулса ячĕ.

— Пуранăçна çăлас килмест-и вара санăн?

— Сиртен çăлăнăç кĕтместĕп эпĕ...

Каласа пĕтерме памарĕ вăл мана.

— Каçарма та пултаратпăр эпир,—терĕ.— Хăвна çăласси те, ачуна çăласси те хăвăнтан килет.

„Ачуна" тесен, чĕре пушшех йĕплесе ыратса кайрĕ манăн. „Петьăна та тем тума шутлаççĕ-ши вара ку урнă кашкăрсем?"

— Ăна валли санăн икĕ ыйту çине ответ памалла,—терĕ Парашка малалла, питне ман патарах илсе пырса.—Кам парса ячĕ сана çав минăсене? Кама пама илсе килтĕн эс вĕсене кунта? Çавна çеç кала, урăх эпир санран нимĕн те ыйтмастпăр. Халех ирĕке кăларса яратпăр.

Вăл пукан хыçĕ çине тайăнса, аялти тутине çыртса лартрĕ. Хытă пăлханчĕ пулмалла çав. Эпĕ çав ыйтусене хирĕç тĕрĕссипе каласа парсанах, вĕсен пысăк çĕнтерӳ пулмалла пулнă-çке!

Анчах эпĕ нимĕн те каламарăм. Мĕншĕн тесен, эпĕ кайран мĕн пулассине пит аван чухлатăп. Эпĕ вара хама çеç мар, хамăн чи çывăх та чи хаклă тусăмсене те пĕтернĕ пулăттăм.

Ман ăна хăйне темĕн тĕрлĕ усал сăмахсем каласа тăкас кăмăл хăпарса çитрĕ. Нимĕç сучки, сутăнчăк, çĕлен-калта... Кама çавăрма хăтлантăн эсĕ тăшман енне, йытă пуçĕ?

— Илтрĕн-и эсĕ ман сăмахсене?—сассине тăруках хытарчĕ хайхискер, эп нимĕн те чĕнменнине пула.

— Илтрĕм,—терĕм эпĕ.

— Ма ответ памастăн эппин? Ытларах шарламасăр ларсан, хăвна çăмăлтарах пулĕ, тетĕн-и? Асту, пачах урăхла пулса тухма пултарать!

Сисрĕм—ку юхха каллех тарăхма пуçларĕ.

— Ну, калатăн-и, каламастăн-и?—сасартăк кăшкăрса ячĕ вăл.—Пурăнас килет-и санăн, е халех йытă вилли пулса выртас килет-и? Эпĕ ĕнтĕ: „Халь пуçланать... Халь пуçланать..." тесе ларатăп.

Йăнăшмарăм иккен. Парашка ман паталла чупса пычĕ те—пĕрех айăкран тапрĕ. Эпĕ ўкрĕм. Çав самантрах икĕ нимĕç салтакĕ мана тăрăхла сак çине тăсса хучĕç те тимĕр хулăсемпе хĕнеме тапратрĕç. Пĕр вунпилĕкçирĕм хут çапсанах, эпĕ ăнран кая пуçларăм. Хăлхара тимĕр хулăсем шăхăрни тата Парашкăн ирсĕр сасси кăна янраса тăрать.

— Калатăн-и, каламастăн-и? Кам ячĕ? Кам патне килтĕн?..

Унтан сасартăк мана тăратса лартса, питрен сивĕ шывпа сапрĕç.

— Туятăн-и эпир мĕн тума пултарнине?— хăлха патне пырса кăшкăрчĕ Парашка.— Асту, ку пуçламĕш анчах-ха, малашне эпир сан чунна йыт чӳпĕкĕ туса тăкăпăр! Ну, кала хăвăнтан мĕн ыйтнине! Кала, вată йытă!

Эпĕ çаплах нимĕн те чĕнмерĕм.

Мана вăл темле йывăр япалапа пуçран çапрĕ. Урăх нимĕн те астумастăп. Тăна кĕрсен, хама каллех леш вилесем тултарнă подвала пырса чикнине тавçăрса илтĕм. Мĕн чухлĕ выртнă эпĕ унта—пĕлместĕп. Те пĕр талăк, те иккĕ, те виççĕ... Подвала ниçтан та çутă кĕмен пирки халь кăнтăрла е каç пулнине те чухласа илме май килмерĕ. Тăрса ларас тесеттĕм—анчах пĕр вăй та юлманнипе тата пĕтĕм шăмшак тӳсмелле мар ыратнипе вырăнтан та хускалаймарăм.

— Тинех вилетĕп пулмалла ĕнтĕ...—тесе шухăшларăм та, çавăнтах Петьăна аса илтĕм...—Вăл мĕнле-ши? Кам та пулин хĕрхенсе, хăй патне илĕ-ши ăна? Пĕр татăк çăкăр парĕ-ши?

Питĕ йывăр, тӳсмелле мар йывăр пулса кайрĕ мана. Ку тарăнччен тӳснĕччĕ эпĕ, хама темле асаплантарсан та тăшмансем умĕнче пĕр тумлам куççуль те кăларманччĕ, анчах кунта мана никам та курмасть, йĕри-

ҭавра хытнӑ вилесем çеç выртаççӗ, вӗсем нимӗн те илтес çук. Эпӗ кӳтсе çитнӗ чун çемçеличченех макӑртӑм вара... Хама çӑ-ласси çинчен шухӑш та пулман ун чухне ман пуçӑмра, мӗншӗн тесен мана пурпӗрех никам та килсе çӑлас çук. Анчах Петя... Пӗччен тӑлӑха тӑрса юлать мӗскӗнӗм.. Мирлӗ вӑхӑтра пулсан—колхозӗ те пулӑшмалла, патшалӑх та пӑрахас çук, хысна шучӗпе вӗрентме те ямалла. Анчах халь... халь ӑна вӗçӗмсӗр асап çеç тӳсме тивӗ... Çавӑншӑн хурланчӗ ман чун, çавӑн пирки тӳссе тӑраймарӑм... Тепӗр тесен, тен чӗре те сиснӗ-и çав кунах ырӑ мар пуласса...

Вӑхӑт вӗçӗмсӗр тӑсӑлчӗ. Куççуль типрӗ манӑн, кӑшт лӑпланнӑ пек те пултӑм. Халь ӗнтӗ эпӗ хам нимӗççене хирӗç çавтери сахал ӗçленӗшӗн кӳреннипе ӑшчик çунма пуçларӗ. Саша çине те тарӑхса илтӗм: мӗншӗн вӑл мана партизансен ӗçне тӳрех хутшӑнтарман?

Çак вӑхӑтра сасартӑк подвал алӑкӗ чӑнкӑртатса уçӑлчӗ те, тӗттӗмре электричество çутти ялкӑшса илчӗ.

— Каллех мана илме килчӗç пулӗ ӗнтӗ,— тесе шухӑшларӑм эпӗ, анчах хускалмарӑм, куççене хупсах выртрӑм.

Нимӗççем чӑнах та мана шыраççӗ мӗн. Вӗсем пӗр виле патӗнчен тепӗр виле патне

пырса хунарĕпе çутатса пăхаççĕ, вĕсене урисемпе тĕрте-тĕрте чĕрри-виллине тĕрĕçлеççĕ, хăйсен чĕлхипе темскер пакăлтатса калаçаççĕ. Унтан ман пата та çитрĕç. Пĕри кукленсе ман ал тымарне тытса пăхрĕ, вара, эпĕ вилменнине пĕлчĕ пулмалла та, çав алранах карт! туртса тăратса лартрĕ.

— Пойдьём, скотт!

Эпĕ сулăнса кайса каллех ӳкме пуçларăм, анчах тепри мана ик хул айĕнчен тытса ура çине тăратрĕ те—хыçалтан тапа-тапа уттарса кайрĕ. Каллех çав тĕттĕм коридорсем, кукăрмакăр пусмасем тăрăх çавăрăнса хайхи пӳлĕме çитсе кĕтĕмĕр. Эпĕ ура çинче тăрайманнине кура пулас—тӳрех стена çумĕнчи пукан çине лартрĕç мана.

— Паян епле асаплантараççĕ-ши тата?.. Хăвăртрах персе пăрахсан авантарах пулĕччĕ..

Пуçăм çурăлса тухас пек ыратса кашлать, пĕтĕм шăмшак вутпа хĕртнĕ пек чашкăрса тăрать, халăм пĕтсе çитрĕ...

Анчах вĕсем мана часах вĕлерме шутламан иккен. Мана вĕлернинчен усă çук-çке-ха вĕсене, мĕншĕн тесен вĕсем вара нимĕн пĕлмесĕрех юлма пултараççĕ. Хăйсем пĕлес тенине вĕсем епле майпа та пулсан пăчăртаса кăларасшăн манран, çавăнпа та чи пысăк

та хăруша асап шухăшласа кăларнă мана валли...

Малтан сулахайри пӳлĕмрен икĕ нимĕç тухса сĕтел хушшине пырса ларчĕç, ман çине пăха-пăха илчĕç. Пĕрине палларăм—вăл мана Парашка малтанхи хут допрос тунă чухне сăнаса ларнă икĕ „тимĕр хĕреслĕ“ офицерах иккен. Çур минут та иртмерĕ пулĕ—вăл сĕтел çинчи шăнкрав çине пусрĕ. Вара сылтăм енчи алăк ярах уçăлчĕ те, хайхи йытă-Парашка ку пӳлĕме... манăн ывăла, Петьăна, аллинчен туртса тухрĕ. Манăн чĕрем тапма пăрахрĕ, куççем нимĕн курми хуралса килчĕç...

— Авă мĕншĕн... авă мĕншĕн ачана асăнчĕ вăл ун чухне...—шухăшларăм эпĕ, иртнĕ допроса аса илсе. Ун чухне мана Парашка „ачуна та çăлма пултаратăн“,—терĕ-çке?.. Эппин, вĕсем мана хама çеç мар, манăн ачана та пĕтерсе хурасшăн. Мĕскĕн Петя! Епле майпа илсе килнĕ-ши ăна кунта? Тен, тем тĕрлĕ асаплантарса пĕтернĕ? Тен, асапсене тӳсеймесĕр, вăл мĕн те пулин каласа панă вĕсене?.. Хытă асăрхаттарнăччĕ эпĕ ăна, темле пулсан та, ют çынсене нимĕн те калама юрамасть, тесе вĕрентнĕччĕ. Тӳсеймерĕ пулсан анчах...

Çĕр тĕслĕ шухăш çавăрăнса тухрĕ ман пуçа кĕске самант хушшинче.

Парашка çав вăхăтра Петьăна сĕтел умĕнчи пукан çине пырса лартрĕ. Эпĕ ĕнтĕ халь Петьăн шурса кайнă сăнĕсĕр, унăн хăранипе сиксе тухас пек чарăлнă куçĕсемсĕр пуçне пÿлĕмре ним те курмастăп. Хам çинчен нимĕн те шухăшлайми пулса çитрĕм, пĕтĕм шухăш та ывăлăм çинче кăна. Ку таранччен мĕн пулнă-ши ăна, малашне мĕн пулать-ши?

Парашка нимĕçсемпе темскер калаçса илчĕ. Унтан вăл Петя çумне тăрса ăна хулпуççинчен тĕртрĕ.

— Ну, ачам.,. Çак кам-ха вăл?—ман çинелле кăтартса ыйтрĕ вăл Петьăран.—Сан аннÿ-и?

— Анне... –пăшăлтатрĕ Петя.

— Эс юрататăн-и ăна?

— Юрататăп...

— Хĕрхенетĕн-и?

Петя чĕнмерĕ, унăн куçĕсем тата ытларах чарăлчĕç.

— Хĕрхенместĕн-и эппин?—Парашка пĕр хушă кĕтсе тăчĕ, унтан каллех ыйтрĕ:—Акă, халь санăн аннÿ тĕрмере ларать... Шел мар-и вара ăна? Сан ăна тĕрмерен кăларассу килмест-и?

— Килет...—малтанхинчен те шăппăнтарах ответ пачĕ Петя.

— Эпир ăна паянах кăларса яма пулта-

ратпăр, вара эсир иксĕр чип-чиперех киле каятăр. .

Петя ун çине тĕлĕнсе, ĕненмесĕртерех, хăраса пăхрĕ. Парашка малалла илĕртме тытăнчĕ.

— Ĕненместĕн-и? Чăнласах калатăп. Ма улталас-ха пирĕн сана?

— Кăларăр...—терĕ Петя. Унăн сăнĕ кăшт çеç çутăлнă пек пулчĕ.

— Кăларатпăр,—терĕ те Парашка, тата тепĕр хут нимĕçсем çине пăхса илчĕ.—Анчах эс пире сирĕн пата камсем пырса çӳренине тата аннӳне хулана кам янине каласа пар. Ним пытармасăр каласа пар та, вара сире çак самантрах кăларса яратпăр. Юрать-и? Ман чĕре тата хытăрах пĕçерсе кайрĕ...

— Петя... Ывăлăм!—хам сисмесĕрех пăчăртанса тухрĕ ман пыртан. Çав самантрах Парашкăпа пĕр нимĕçĕ ман еннелле çаврăнса харăс кăшкăрса пăрахрĕç.

— Молчать!

— Ну, кала часрах,—васкаса хистеме тапратрĕ Парашка манăн ывăла.—Кала та—аннӳне çăлатăн вара... Камсем пыратчĕç сирĕн пата? Хулана аннӳне кам ăсататчĕ? Мĕн калаçатчĕç вĕсем?

Петя ни вилĕ, ни чĕрĕ пулса ларчĕ, анчах... нимĕн те каласа памарĕ тăшмансене.

— Пĕлместĕп, курман эпĕ никама та! — терĕ çеç.

— Суятăн, йытă çӳри! — сассине тăруках хытарчĕ Парашка. — Епле ăнланаймастăн эсĕ: ху туннипе эсĕ аннӳне пĕтеретĕн!

— Эп сире килтех каласа патăм вĕт нимĕн те пĕлместĕп, тесе... — макăрса ячĕ Петя. — Мĕн тата эсир... Никам та пыман пирĕн пата, эпир аннепе иксĕмĕр кăна пурăннă...

Ман хамăн та, чĕрене тем пек хытарсан та, куççуль шăпăрах юхса анчĕ. Ку ĕнтĕ, пĕр енчен, хамăн ача çавтери çирĕп пулма пĕлнишĕн, тепĕр енчен ăна хĕрхеннипе çапла пулса тухрĕ.

— Каламастăнах пулсан — эс хăвăн аннӳне юратмастăн та, хĕрхенместĕн те эппин, — пĕветнĕ тутисене чалăштарса илчĕ Парашка. — Ну... Эпир те хĕрхенсе тăмăпăр ăна! Сана хăвна та хытă лекме пултарать, мĕншĕн тесен эс пӳтсĕр ача иккен!

Тахăшĕ систернипе ман çине сасартăк тĕреклĕ нимĕç салтакĕ сиксе ӳкрĕ те, манăн алăсене хыçалалла пăрса асаплантарма тапратрĕ. Тӳсме çуккипе эпĕ йăнăшса ятăм.

— Юлашки хут ыйтатăп санран! — каллех чупса пычĕ хайхи Парашка ура çине сиксе тăнă Петя патне. — Вĕлеретпĕр аннӳне! Ăна эсĕ çеç çăлма пултаратăн, йытă çӳри!

Пуç çӳлелле çĕкленсен куртăм: Петя сиксе чĕтĕрет, Парашка ун умĕнче револьверпа юнаса тăрать.

— Ан тивĕр аннене, вăл айăплă мар!—тесе, калама çук хыттăн кăшкăрса макăрса ячĕ те Петя, ман паталла ыткăнчĕ. Анчах ăна сĕтел хушшинчи нимĕçсенчен пĕри хăваласа çитсе каялла тĕртсе ячĕ. Мана малтанхи допрос вахăтĕнчи пекех сак çине тăсса хурса, тимĕр хулăсемпе хĕнеме тапратрĕç. Эпĕ хамăн ывăл ниçта кайса кĕрейми хăрушла кăшкăрнине илтрĕм, анчах часах ăнран тухнă пулмалла—малалла мĕн пулнине пĕлместĕп...

...Анчах та пирĕн асапсем çакăнпа та вĕçленсе çитмерĕç-ха.

Тепĕр кунне мана подвалтан каллех допроса сĕтĕрсе тухрĕç. Хам мĕн тери вăйсăрланса çитни çинчен каламастăп та ĕнтĕ. Кашласа тăракан пуçри шухăшсем пĕр Петя çинчен çеç пулчĕç. Персе пăрахман-ши ăна? Юлашки хут та пулин курса юлмăп-ши?

Допрос вăрăма пымарĕ. Эпир ывăлпа иксĕмĕр те нимĕçсене нимĕн те каласа паманни вĕсене çавтери тарăхтарса çитернĕ ĕнтĕ, çавăнпа та вĕсем хăйсен ĕçне татăклăн туса хума шут тытнă курăнать.

Мана пӳлĕме пырса лартсан кăшт тăхтасанах, вĕсем Петьăна та илсе пычĕç. Чĕре çурăлсах каятчĕ... Ăна та хĕнесе пĕтернĕ

иккен, тискерсем, ачан пичĕ-куçĕ шыçса тухнă, çамки çинче юн хытса ларнă, хăй аран сывлать...

— Текех сана ачашласа тăмастпăр ĕнтĕ, йăлăхтарчĕ пире ку вăйă,—терĕ Парашка, пирусне чăмла-чăмла.—Çитет! Ку—пирĕн юлашки калаçу пулать. Нумай ыйтмастпăр санран, икĕ ыйту çине кăна ответ пар: кам патĕнчен, ăçтан илсе килтĕн эс вăл минăсене, тата—кама памаллаччĕ вĕсене санăн? Срок сана—виçĕ минут, унтан вара...—Вăл пĕрре аллинчи сехет çине, тепре сĕтел хушшинчи чул сăнлă нимĕçсем çине пăхса илчĕ те, вĕсене темскер каларĕ.

— Я, я,—терĕç нимĕçсем.—Гут.

Вăхăт шурĕ. Эпĕ чĕнмерĕм. Йывăррăн сывласа, шăлсене çыртса ывăл çине пăхса лартăм. Парашка чăнласах каланине ĕнентĕм эпĕ, мĕншĕн тесен ку историн вĕçĕ хăçан та пулин çитмелле пулнă-çке-ха.

— Паллах, мана вĕлерессех ĕнтĕ вĕсем. Е персе пăрахаççĕ, е çакаççĕ... Петьăна чĕррĕн хăварсассăнччĕ хуть...

Анчах эпĕ йăнăшнă иккен. Вĕсен пачах урăхла шухăш пулнă. Вĕсем ман валли вилĕмрен техăрушăрах асап шухăшласа тупнă...

— Вăхăт иртрĕ,—терĕ Парашка.

Эпĕ сасартăк ыйăхран вăраннă пек пултăм. Сĕтел хушшинчи нимĕç сехет çине пăхса

пуçĕпе сулчĕ. Хураллакан салтаксенчен пĕри ман пата пырса сĕтел пуçне тăратрĕ те, аллăмсене хыçалалла тытрĕ. Тепри Петьăна сетелĕн тепĕр пуçне илсе пычĕ. Унăн сулахай аллине сĕтел хĕррине хучĕ.

— Мĕн тăвасшăн кусем? Мĕн шут тытнă?—тесе шухăшлама ĕлкĕртĕм кăна эпĕ— Петя çумне тепĕр хĕрлĕ çӳçлĕ самăр нимĕç—чăн-чăн мясник ĕнтĕ!—пырса тăчĕ.

— Юлашки хут...—терĕ Парашка ман çине куçхаршисем айĕн çавтери тискеррĕн пăхса.—Кам ячĕ? Кам патне?

Эпĕ чĕнмерĕм. Пыра тем тулнă пек пулчĕ, куççем каллех хуралса килчĕç. Самант иртрĕ, иккĕ...

— Говорить!—кăшкăрчĕ „тимĕр хĕреслĕ" нимĕç.

Çав вăхăтрах Петьăпа юнашар тăракан самăр нимĕç хĕç пек сарлака, çап-çутă штык çĕклерĕ.

— Говорить!—каллех кăшкăрчĕ „тимĕр хĕресли".—Кому пришёл, зобак?

Ответ парăнне манăн пыртан темле тискеррĕн йынăшнă сасă çеç тухса кайрĕ. Сыв лăшра хурçă штык ялтăртатса илчĕ. Унтан Петя „а-а-а!..."—тесе кăшкăрни илтĕнчĕ. Эпĕ кĕçех çĕре персе анаттăм, анчах хама хыçалтан тытса тăракан нимĕç ӳкме памарĕ, çитменнине тата Петя çывăхнерех тĕксе

пычĕ. Çавăнтах ухмаха ерсе каяттăм: ачан сулахай аллин пуç пÿрнине патах касса татнă, юн палкать кăна, хăй çавтери кăшкăрать, аллине сĕтел çинчен илме хăтланать, урисемпе ниçта та кайса кĕреймесĕр тапăртатать, анчах та нимĕн те тăваймасть—нимĕç ăна хытă тытса лартнă...

Кинжал каллех сывлăша çĕкленчĕ.

— Кала!—çухăрчĕç темиçен пĕр харăс.

— Каламастăп! Вĕлерĕр! Ăна та, мана та вĕлерĕр, татăкăн-татăкăн ваклăр—ним те каламастăп!—кăшкăрса ятăм вара эпĕ вĕсене хирĕç, юлашки вăя пухса.

Мана тахăшĕ çупса ячĕ, çав вăхăтра каллех штык ялтăртатрĕ, татах Петя шари-и! кăшкăрса яни илтĕнчĕ.. Тахăш самантра курчĕç куçăмсем: унăн аллине ывăç тупанĕ таранах касса татнă...

Эпĕ ĕнтĕ ăнран тухса, урнă пекех пулса кайрăм пулмалла.

— Тискерсем, неушлĕ эсир пире çапла тунипе парăнтарма шутлатăр? Пустуй ĕмĕтленетĕр! Нихçан та пулас çук вăл!—тесе кăшкăртăм.

Кинжал татах ялтăртатрĕ...

* * *

Варвара Васильевна калама чарăнчĕ.

— Çакăн хыççăн гестапора хама мĕн-мĕн

тунине нимĕн те астумастăп, тĕрмене пырса пăрахсан тин тăна кĕнĕ эпĕ,—терĕ те вăл кăшт ларсан, таранăн сывласа илчĕ. Çак пур асаилӳсем унăн нумай хĕнхур курнă, нимĕнпе виçме çук асап тӳснĕ чĕрине мĕн тери ыраттарнине туйса, эпир тек нимĕн те ыйтасшăн марччĕ унран, анчах вăл хăйĕн калавне вĕçне çитичченех каласа парас, терĕ куранать. Тепĕр хут хăвăн хуйху-суйху çинчен сывăх çынна каласа парсан, чĕрене çăмăлтарах пулать-çке.

— Тăвата уйăх хупса усрарĕç мана тĕрмере...—терĕ вăл малалла.—Ыра çынсем пулăшнипе кăштах ура çине тăракан пулсан, мана каллех допроссене сĕтĕрме тапратрĕç. Кама та пулин „партизан" тесе хупаççĕ-тĕк— мана туртса тухаççĕ: çак çынна ăçта курнă эс, кам вăл, мĕн ятлă,—а эпĕ нимĕн те пĕлместĕп. Кашнинчех патак лекетчĕ вара. Чĕррĕн тухассăн шутламан ĕнтĕ. Допроссенче пулман вăхăтра хуйхăм асаплантарчĕ—Петя çинчен çав гестапора пулнă юлашки каç хыççăн эпĕ нимĕн те пĕлмен-çке...

Хĕрарăм каллех йывăррăн сывласа илчĕ.

— Тĕрминчен эпĕ пачах кĕтмен çĕртен тухрăм. Тĕрĕссипе—тухрăм темелле те мар, тухса ӳкрĕм, темелле.—Варвара Васильевна ку тĕлте кăштах кулнă пек те пулчĕ.—Асапланса, вăйсăрланса, ырханланса çитнĕ çынсем

пирĕн камерăра кашни кунах вуншарăн вилетчĕç. Вĕсене вара надзирательсем ирсерен сĕтĕрсе тухса каятчĕç. Вилнисемпе пĕрле час-часах вилсе çитейменнисем те лекетчĕç. Калăпăр, çын тăраймасть, калаçайми те пулса çитнĕ, паян вилмесен—ыран вилетех вăл... Мĕн тума ыранччен кĕтес, пĕрре килнĕ чух, çула май тенĕ пек, хула хыçне кайса пăрахма пулать-тĕк? Эпĕ вара шăпах çавăн йышши „виле“ шутне лекрĕм. Мана хула хыçĕнче танксене чарса лартма алтнă канава вилесемпе пĕрле чĕрĕллех илсе кайса пăрахрĕç. Пырать-ха—çулла, атту тĕрмере вилейменнине—канавра шăнса вилмелле пулатчĕ...

Варвара Васильевна пирĕн куçсенчен пăхапăха:

— Чăнах та, тĕлĕнмелле вĕт? Епле пек туйăнать сире?—тесе ыйтрĕ.

— Пит те тĕлĕнмелле,—килĕшрĕмĕр эпир.

— Çав канавра кăштах чун кĕнĕ мана,—çăмăлтараххăн сывласа ячĕ вăл халь.—Ир пырса пăрахнăскер, кăнтăрлапа вилесем хушшинчен упаленсе тухрăм. Каллех ырă çынсем тĕл пулчĕç—пĕр карчăкпа старик. Вĕсем çав канава икĕ уйăх хушши кашни кунах пырапыра пăхнă иккен—нимĕçсем тытса кайнă хăйсен ачисене шыранă. Мана курчĕç те, хăйсем патне илсе кайрĕç.

...Киле эпĕ тепĕр икĕ эрнерен, кăштах вăй

кӗрсен, таврӑнтӑм. Полицисем манӑнне пӗр япала та хӑварман, мӗн пуррине тӗппипех шӑлса тухса кайнӑ, катӑк тӑм куршак та пулин юлман хӑть, анчах эпӗ, тупата, ун пирки пӗртте хуйхӑрмарӑм. Эпӗ урӑххи ҫухаласран хытӑ хӑранӑччӗ. Ак ҫакӑн пирки... Варвара Васильевна хӗвӗнчен сӑран хуплашка хушшине хӗстернӗ пӗчӗк ҫеҫ кӗнеке кӑларса тыттарчӗ мана. Эпӗ ӑна уҫрӑм та:

— Партийный билет № 0512253,—тесе ҫыррине вуларӑм.

— Нимӗҫсем манӑнне мӗн пуррине, юратнӑ ачама, сывлӑха туртса илчӗҫ, анчах кӑна— чи хаклине— эпӗ ҫавах та упраса хӑварма пултартӑм... Эпӗ ӑна ҫак Мишӑна 1941 ҫулта ҫырмари окопа вырнаҫтарса килнӗ каҫ ҫӗр айне алтса пытарсаттӑм, тӗрмерен таврӑнсан вара тӳрех чавса кӑлартӑм та, текех хамран пӗртте уйӑрмарӑм... Эсир таварӑнассакӗтрӗм...

— Халь ӗнтӗ кӗтсе илтӗн,—терӗ те Палюков, ҫак нихҫан сивӗнме пултарайман хӗрӳ чӗрӗллӗ ватӑ совет хӗрарӑмӗшӗн савӑнса кулса ячӗ. Варвара Васильевна хӑй те хавасллӑн кулса илчӗ.

— Кӗтсе илтӗм ҫав...—Вӑл пӗр хушӑ пирӗн ҫине ҫав тери ӑшӑ куҫӗсемпе пӑхса ларчӗ, унтан:

— Анчах эпӗ сире алӑсене усса, ним тумасӑр кӗтсе ларнӑ, тесе ан шутлӑр,—терӗ.—

Эп таврӑнсан ик-виҫ кунранах ман пата партизансем ҫӳреме тытӑнчӗҫ. Вӗсенчен пур хыпарсене те пӗлсе тӑраттӑм. Чӑн малтан, вӗсем мана хамӑр хулари гестапо ҫуртне пирӗн самолётсем вӗҫсе килсе бомбӑпа тӗпренех аркатни ҫинчен пӗлтерсе савӑнтарчӗҫ. Гестапо пуҫлӑхӗ—хайхи икӗ „тимӗр хӗреслӗ" нимӗҫ те, мана асаплантаракан сутӑнчӑк йытӑ—Парашка та, ыттисем те нумайӑшӗ хупланнӑ, тет вара унта... Бомбӑсене хӑш ҫӗре пӑрахмаллине тӗллеттерекенӗ пирӗн тӑван, хайхи Саша пулнӑ. Хӑех килсе каласа пачӗ мана ун ҫинчен. Ыталасах чуптурӑм вара эпӗ ӑна! Унтан Хӗрлӗ Ҫар ҫӗнтерӗвӗсем ҫинчен пӗлтерме тытӑнчӗҫ. Кавказри, Сталинградри, Ростов хули патӗнчи ҫапӑҫусем ҫинчен каларӗҫ. Вӗсем мана каласҫӗ—эпӗ пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗн хамӑр хӗрарӑмсем хушшинче саратӑп... Атту уйрӑм ҫынсем эсир таврӑнасса шанма та пӑраха пуҫланӑччӗ пӗр хушӑ. Ну, ун пек ырӑ хыпарсем киле пуҫласан, кӗтнӗҫемӗн кӗтме тытӑнчӗҫ те—кӗтсе илчӗҫ ҫав...

Варвара Васильевна татах савӑнӑҫлӑн кулса илчӗ.

— Пӑх-ха, сӑмах-юмахпа эпир кусем ҫинчен мансах кайнӑ-ҫке!—терӗ вӑл унтан кӑшт чеерехҳӗн, сӗтел ҫинче тӑракан тулли черккесем ҫине кӑтартса.—Ӗҫсе ярар-ха эсир килнӗ ятпа!

* * *

Ун патӗнчен эпир тулта пӑч тӗттӗм пулса ларсан тин тухрӑмӑр. Ҫапӑҫу шавӗ халь тата инҫетререхре кӗрлетчӗ. Пирӗн чаҫсем нимӗҫсене тата малалла хӑваласа кайнӑ. Малти линирен орудисем кӗрӗслеттернӗ сасӑсем кӑна илтӗнкелеҫҫӗ, пӑшал-пулемёт сассисем илтӗнмиех пулнӑ ӗнтӗ.

Палюков та, эпӗ те урам тӑрӑх пӗр сӑмах чӗнмесӗр утрӑмӑр. Эпир ҫак самантра Варвара Васильевна каласа панисем ҫинчен шухӑшласа пытӑмӑр. Ытла та чӗре патне кӗрсе ларчӗ унӑн калавӗ, ӗмӗр манмалла мар асра юлчӗ.

— Тӗрӗс ҫав,—сӑмах хушрӗ Палюков чылай хушӑ калаҫмасӑр пынӑ хыҫҫӑн,—пирӗн халӑх пурнӑҫа, ирӗке, хӑйӗн тивӗҫне юратни—вилӗмрен те вӑйлӑрах...

— Паян иксӗмӗр илтни ӑна нимрен те лайӑхрах кӑтартса парать ӗнтӗ,—килӗшрӗм эпӗ.

Тата пӗр хушӑ чӗнмесӗр пытӑмӑр. Уйрӑлмалли тӗле ҫитсен, Палюков мана сывӑ аллине пачӗ те:

— Медсанбата каймастӑп эпӗ,—терӗ.

— Мӗншӗн? Санӑн аллу аманнӑ вӗт-ха?—тӗлӗнерех ыйтрӑм эпӗ.

— Пултараймастӑп,—хаштах сывласа илчӗ манӑн тус.—Малти линие таврӑнатӑп. Чун

чăтмасть тылра тăма. Алă... тўрленет вăл. Кĕçĕрех каятăп!

Вăл мĕншĕн çакăн пек шут тытнине эпĕ питĕ лайăх ăнлантăм. Вăл тăшмана часрах таварма васкарĕ. Петя вилĕмĕшĕн, çак ырă карчăкăн асапĕсемшĕн, пуриншĕн те...

1945, январь.
Шупашкар.

# САЛТАК ЧУНĔ

И. Н. Павлов майора.

...Сывалаканнисен палатинче эпир виççĕн выртаттăмăр.

Çанталăк кунран-кун ăшăтса пычĕ, майĕпе пĕтĕм тавралăх симĕсленчĕ, йывăç çулçисем те сарăлчĕç, унтан медсанбат вырнаçнă темĕн пысăкĕш илемлĕ сад, кăпăш юрпа витĕннĕ пек, чечексем айне пулчĕ.

Каçсерен садра шăпчăк юрри янрарĕ, унта та кунта—кашни палата умĕнчех—е купăс, е патефон сасси илтĕнчĕ, хушăран юрлакансем те пулчĕç. Вăхăтран вăхăта малти линирен орудисем пени тата пуç тăрринче нимĕçсен „юнкерсĕсем" хаяррăн ĕрлесе иртни, вĕсем хыççăнах хĕрлĕ çăлтăрлă истребительсем ыткăнни илтĕнмен пулсан, пирĕн пурăнăç мирлĕ вăхăтри курорт пекех туйăнмаллаччĕ. Анчах та фронт нирĕнтен улт-çич çухрăмра кăначчĕ, кашни кун тенĕ пекех вăй-

лă артиллери налёчĕсем туни илтĕнетчĕ, аманнисене те илсе килкелетчĕç, çавăнпа та хамăр вăрçăра пулнине манса кайма çукчĕ. Тем çинчен калаçсан та, сăмах-юмах юлашкинчен пурпĕрех çапăçусем, ăнсăртран пулнă тĕлĕнмелле эпизодсем çине пырса тухатчĕ.

Пĕр каçхине, тухтăрпа сестрасем обход туса тухса кайсан, манпа хирĕç выртакан çамрăк кăна лейтенант палата чӳречине уçса ячĕ те, çывăхрах усăнса тăракан шурă чечексем çине пăхса, чылай вăхăт шухăша кайса ларчĕ. Унтан стена çинчи пăтаран гитара илсе унăн хĕлĕхĕсене йăвашшăн янратрĕ тĕ, ерипен юрлама пуçларĕ. Вăл пур фронтовиксем те çав тери юратакан „Землянка" текен юрра юрларĕ... Малтан хуллен çеç, çăварне кăшт кăна уçса, сăмахĕсене шăл витĕр кăларса юрларĕ, унтан çирĕплленсех, вăйлансах пычĕ унăн юрри. Юрланăçемĕн хăйĕн сăнĕ те улшăнса пычĕ, куçĕсем те темле урăхларах çутăлчĕç...

Ку лейтенант пĕтĕмпе те вунтăхăр çула çеç кайнăччĕ-ха, çапах та вăрçăри хурапа шурра пурне те тӳссе ирттерме ĕлкĕрнĕ. Вăтам шкул пĕтерсен, командир пуласшăн çуннипе, вăл тӳрех çар шкулне кайса кĕнĕ, анчах икĕ уйăхранах вăрçă пуçланнă та — хăй ирĕкĕпе фронта кайнă. Кунта вара нумай курма тивнĕ ăна, тем тĕрлĕ çапăçусенче те пулнă

вăл, тыткăна лексе те тарса тухнă, виçĕ хут аманса сывалнă, каллех строя таврăннă, халь вăл тăваттăмĕш хут суранланнă хыççăн вырттатчĕ. Унăн çамрăк кăкăрне орденпа медаль капăрлатса тăратчĕç.

Тăванĕсем пулман унăн—хăй ача çуртĕнче ӳснĕ, —çырусем пит сайра, ытти фронтсенчи юлташĕсенчен çеç илкеленĕ. Çав вăхăтрах унăн чĕринче сӳнми юрату çуннă...

Вунтăхăр çул! Эпир кашниех астăватпăр вăл вăхăта. Пĕр-пĕр илемлĕ хĕр—çĕр çинчи хитрелĕхе пĕтĕмпех пухса йышăннă пек курăнать, тĕнчери пĕр çын та сан пек юратма пултарас çук пек туйăнать. Çак лейтенант та, çар шкулĕнче чух хулана тухса çӳрекелесе, хаçат киоскĕнче сут тăвакан пĕр Наташăпа паллашнă та, ăна юратса кайса вĕçĕмсĕр хисеплеме тытăннă.

Миçе çĕр хут каларĕ-ши вăл пире ун çинчен! Хамăр унăн савнă хĕрне ĕмĕрне те курман пулсан та, ăна халь эпир пин çын хушшинче те палласа илме пултараттăмăр пулĕ. Пĕтĕмпех пĕлсе çитрĕмĕр эпир. Наташăн çӳçĕсем сăмала пек хура, куçĕсем—пиçнĕ çĕмĕрт пек, сулахай питçăмарти çинче çаврака турпалли пур, шăлĕсем—ахах еверлĕ, калаçнă чух яланах хĕрелсе каять... Вăтам пӳллĕ, хулпуççийĕсем тăваткăлрах, утти вĕтĕ, пуринчен ытла ăна чечеклĕ сенкер сараппан килĕшет...

Наташа пуранакан хула халĕ нимĕçсен аллинче пулнă. Вăл те тарса хăтăлнă, те унтах юлнă—лейтенант ăна пĕлмест. Тен вăл тахçанах асапланса вилнĕ пуль, тен партизана кайнă,—ним те паллă мар. Çапах та, лейтенант ăна малтанхи пекех юратнă, хĕрĕн сăнĕ унăн куçĕ умĕнчен çухалман, ячĕ çăвартан кайман.

— Пĕлетĕр-и?—терĕ вăл пире пĕринче.— Эпĕ кашни вĕри çапăçу умĕнех Наташăн карточкине кăларса пăхаттăм. Сире ку кулăшла туйăнать-и тен... А эпĕ чăнах çавăн пек тăватăп. Наташа çине лайăх кăна пăхса илетĕп те, кайран вара вăл яланах манпа юнашар пынăн туйăнать, çавна пула чĕрере темле вăй хутшăнать. Пĕрре, Ржев тăрăхĕнче, эпĕ хамăн взводпа тăшмана флангран пырса çапас тесе, вăрмана кĕрсе кайрăм... Нимĕçсен унта засада пулнă-мĕн. Кăпăрах çавăрса илчĕç пире! Ну, эпĕ часрах круговая оборона турăм та, юлашки патрон юлмиччен çапăçас, терĕм. Пурпĕрех вилĕм... Ачисем манăн питĕ маттурччĕ, пурте сибиряксем те волгарьсем. Арасланса пекех çапăçрĕç ĕнтĕ, каламалли те çук. Фрицсене курăк çулнă пекех çулаççĕ. Анчах лешсем те хытă тарăхрĕç пулмалла— пĕрисем вырăнне теприсем тухаççĕ, çĕр айĕнчен çуралса тухнă пекех. Пĕр сехет пычĕ çапăçу, иккĕмĕш сехет çине кайрĕ... Манăн

взводран пĕтĕмпе те çичĕ çын çеç юлчĕ, ыттисем е вилнĕ, е йывăр аманнă. Патронсем пĕте пуçларĕç. Тăшмансен пуçĕсем хамăртан вуниилĕк-çирĕм метрта курăнаççĕ. „Русс, сдавайсь!"—тесе кăшкăрма тытăнчĕç, сĕмсĕрленсех çитрĕç. Пĕтмелли курăнсах тăчĕ... Çав вăхăтра сасартăк Наташа çинчен аса илтĕм. Неуштă ăна курмасăрах вилес пулать? Йăпăрт кăна гимнастĕрка кĕсъинчен унăн карточкине туртса кăларса пăхрăм çав. Унăн куçĕсем ман çине кӳренӳллĕн пăхнă пек туйăнчĕç... „Ваня, парăнатăн-и вара?"—тенĕ пек курăнса кайрĕ мана. Чĕре сасартăк хыпсах тухатчĕ!.. „Взвод, за мной, в атаку!"—тесе кăшкăрса ятăм вара эпĕ, ăнран тухса кайнă çын пек, юлашки гранатăсене унталла та кунталла—ăçта нимĕç курăнать—çавăнталла вăркăнтарма тытăнтăм... Сиксе тăчĕ манăн „взвод"—хампа ултă çын! Урра кăшкăрсах сиксе тăчĕ-ха! Граната хыççăн граната çурăлать, автомат кĕпçисем тытмалла мар хĕрсе кайнă... Вара—мĕн тетĕр? Тимĕр ункăран тухрăмăр вĕт! Нимĕçсем тарса пĕтрĕç... Аманнисене те хăтартăмăр... Тупата, çав Наташа çине пăхниçех пулăшрĕ çавăн чух!

Ку сăмахсене çамрăк лейтенант пĕтĕм чĕринчченех, чăнласах каларĕ, çавăнпа та, унăн калавĕнче ачалла айванлăх пулнă пулин те, эпир ăна чăнласах йышăннă пек турăмăр.

Кăшт кăна ĕненмен пек пулниех ăна хытă кÿрентерне пулĕччĕ. Вунтăхăр çул! Чĕре çавăн пек çав ун чух...

Халĕ те, аллине гитара тытса, чÿрече умĕнчи чечексем çине пăхса юрласа ларнă чух та, лейтенант Наташа çинчен шухăшланă ĕнтĕ. Эпĕ ăна унăн кусĕсем яланхи пек мар, темле урăхла çутăлма тытăннинчен асăрхарăм. Паллах, унăн куçĕ умĕнче Наташа сăнĕ тăнă. Тен, лейтенанта хăйĕн юррине Наташа çак чÿрече патĕнче, чечексем хушшинче тăрса итлене пек туйăнна пуль... Майĕпе юрласанюрласан, вăл сасартăк вăйлă аккорд илсе, хыттăнах юрласа ячĕ:

—До тебя далеко, далеко,
Между нами снега и снега,
До тебя мне дойти нелегко,
А до смерти четыре шага...

Унтан тата çĕнĕ аккорд илсе, юррăн тепĕр çаврăмне ачашшăн, пысăк туйăмпа юрласа вĕçлерĕ:

—Пой, гармоника, вьюге на зло,
Заплутавшее счастье зови,
Мне в холодной землянке тепло
От моей негасимой любви..

Гитара хĕлĕхĕсем янрама чарăнсан, лейтенант кăкăр туллин сывласа илчĕ те, каллех шухăша кайнă пек пулчĕ, чÿрече витĕр сада ĕмĕтлевÿллĕн пăхрĕ.

— Аван юрă,—терĕ вăл.—Чĕренех пырса тивет... Чăнах...

— Куççуль кăларма та пултарать çав,— терĕм эпĕ те.

— Ну, куççуль çинченех калаçмăпăр,— килĕшмерĕ вăл манпа, пирус чĕркеме тытăнса,—салтакăн куççуль пулма пултараймасть... Макăракан салтак—салтак-и вăл?

— Ай-ай, пит тӳрĕ кастаратăн-çке!—сасартăк калаçăва хутшăнчĕ çав вăхăтра палатăри виççĕмĕш койка çинче выртакан кăвак çӳçлĕ майор.—Салтакăн чĕри çук тетĕн-и вара эс? Ай чунсăр пĕрене тетĕн-и ăна?

Майора эпир çывăрать пулĕ, тесе шутланăччĕ, анчах вăл çывăрман иккен, чип-чиперех лейтенантăн юррине итлесе выртнă. Эпир калаçма пуçласан, тăрсах ларнă-мĕн.

— Кала-ха,—пуçĕпе лейтенант еннелле сулчĕ вăл,—салтак вара, сан шутпа, ытти çынсем пекех чĕрĕ чун мар-и мĕн? Чĕре пулмасан—Наташуна юратма пултараттăнччĕ-и эс?

— Вăл апла та-ха...—тытăнарах тăчĕ лейтенант.

— Чĕре пурах эппин салтакăн, туйăмĕсем те пур унăн?

— Паллах, пур.

— А мĕн калаçатăн апла пулсан?

— Килĕшмест ара салтака...

— Мĕн?

— Куççуль юхтарни...

— Салтака сĕлеке юхтарни килĕшмест, куççуль кăларни мар!—Майор малти сĕтел патне пырса пирус тивертрĕ.—Ниепле те йышăнма пултараймастăп сан теорине...

— Хăвăранне каласа парăр эппин.

— Калас, тетĕп çав. А эс иглесе тăр. Темле пулсан та, эп санран ытларах пурăнса курнă çын...

— Хирĕçместĕп.

— Эпĕ ĕнтĕ ватă салтак, çирĕм ултă çул хушши пĕрмай çарта служить тăватăп, тăваттăмĕш вăрçа пурăнса ирттеретĕп. Ман чухлĕ юн курсан, тепри ухмаха ернĕ пулĕччĕ, а эп ьăт—хăнк та тумастăп. Чăнах та, нервăсем кăшт выляççĕ ĕнтĕ, анчах вăл вагăлăх çывхарнă май та пулма пултарать. Пĕр сăмахпа калас-тăк, ман чĕре тахçанах чул пек хытса ларнă, тес пулать. Çапах та эпĕ те макăрма пултаратăп иккен... Тĕлĕнетĕр-и?

Майор пĕрре ман çине, тепре чăнах та тĕлĕннĕ лейтенант çине пăхрĕ.

— Хирĕçместĕп, вăрçă эгемĕн чĕрине чăнахах та хытарать, çирĕплетет, унăн хĕрхенӳ туйăмĕ çухалса пырать. Ун вырăнне—тăшмана курайманни ӳссе, тулса хăпарать, час-часах вăл курайманлăхран ним умĕнче

те чаранса таман хаярлах çуралса тухать... Ку пĕтĕмпех тĕрĕс. Вăл çапла пулмалла та ĕнтĕ. Анчах çапах та—ĕненĕр мана!—чи вата фронтовиксен те тепĕр чух чунĕ кӳтсе çитет, унăн куçĕсем ирĕксĕрех шывланаççĕ...

Кăвак çӳçлĕ командир вăраммăн сывласа илчĕ. Эпир ытти чух та унăн калавĕсене питĕ юратса итлеттĕмĕр те, халь, вăл хăйĕн пурăнăçĕнче уйрăмах паллă пулса юлнă саманта аса илнине сиссе, пушшех ним шарламасăр итлерĕмĕр.

— Иртнĕ çулхи август уйăхĕнче çакăн пек истори пулчĕ,—терĕ майор.—Теленмелле истори... Нихçан та манас çук эпĕ ăна! Сычёвка районĕнче тăшман оборонине çĕмĕрсе кĕрсе кайсан, виççĕмĕш кунĕнче эпир пĕр пысăк ял патне çитсе тухрăмăр. Нимĕçсен кунта опорнăй пункт пулнă. Ăна вĕсем малтанах хатĕрлесе хунă—чакмалла пулсан часрах çĕнĕ оборона йышăнса ларма. Шуйттан чухлĕ дзотсем, куранми огневой точкăсем лартса тултарнă, йĕплĕ пралук карнă... Ну, ун пеккисене ĕнтĕ наступленисенче пулнă кашни çынах курнă, хăвăрах пĕлетĕр. Кăпăркапăрах çĕмĕрсе кĕрсе кайма çук, çамкана ыраттарма пулать! Çакăнта самаях тапаçланмалла пуласси ял патне çывхарма пуçлансанах сисĕнчĕ. Сăмаха артиллерипе миномётсене патăмăр... Хĕрĕх пилĕк минут пĕр

чарӑнмасӑр тӳпкерӗҫ вӗсем,—ялта снаряд е мина ӳксе ҫурӑлман вырӑн та юлмарӗ пулӗ. Нумай ҫуртсем ишӗлсе анчӗҫ, теприсем ҫунма тытӑнчӗҫ...

— Малалла!—команда патӑм вара эпӗ пӗтӗм батальона.

Виҫӗ ротӑпа виҫӗ енчен пӗр тӑрук пырса кӗме план тунӑччӗ. Ротӑсем харӑсах ҫӗкленчӗҫ, пӗр 200 метр пуль хӑвӑртах малалла шурӗҫ, анчах урӑх каяймарӗҫ—нимӗҫ пулемӗтсемпе автоматсенчен каллех тӳсмелле мар ҫунтарма тапратрӗ. Пуҫсене ҫӗклеме те ҫук. Пӑр ҫунӑ пекех ҫӑваҫҫӗ пульӑсем... А ялӗ инҫе те мар ӗнтӗ, пулсан пулӗ пӗр 250—300 метр. Питех те ҫывӑх, тепре тӑрса чупмаллӑх кӑна, анчах ҫынсене нумай сухатма пулать. Ҫаванпа та ирӗксӗрех ҫӗр ҫумнерех лӑпчӑнса выртма тивет.

Темиҫе минутран, эпир хускалманнине курa пулас, нимӗҫсем кӑшт сайрарах пеме пуҫларӗҫ. Эпӗ пуҫа умри тӗмескерен ҫӳлерех ҫӗклерӗм те, бинокльпе пӑхса сӑнама тытӑнтӑм. Манӑн тӑшманӑн чи ҫывӑхри огневой точкисене палӑртас килетчӗ. Сулахайран сылтӑмалла йӗркипе пӑхса пытӑм... Ҫав вӑхӑтра пӗр ишӗлнӗ арпалӑх хыҫӗнчен сасартӑк хӗрарӑм чупса тухрӗ. Чип-чипер вырӑс хӗрарӑмӗ—шурӑ тутӑрпа, хура пиджакпа, хӑрах аллипе чӗчӗ ачине ҫӗкленӗ,

тепринпе пӗр виç-тӑват çулхи ачине çавӑтнӑ. Унталла-кунталла пӑхмасӑрах, вӑл пирӗн паталла чупрӗ... Чӗре яштах турӗ манӑн... Бинокле çӗмӗрсе пӑрахас пекех пӑчӑртаса лартрӑм...

Хӗрарӑм хире чупса тухсанах нимӗçсем ӑна хыçалтан пеме тапратрӗç. Пур енчен те переççӗ, çутӑлакан пульӑсем ун çуммипех ирте-ирте каяççӗ, а вӑл çаплах чупать, çаплах чупать... Пур вӑйне пухса, каялла çавӑрӑнса пӑхмасӑр, пирӗн паталла чупать!

Майор хӑйӗн калавне лӑпкӑнах пуçланӑччӗ, анчах ку тӗле çитсен палӑрмаллах пӑлханма пуçларӗ. Вӑл пирус тӗпне умлӑн-хыçлӑн ӗме-ӗме илчӗ, унтан ӑна вӑштах тулалла ывӑтрӗ те, ура çине тӑрса калле-малле уткалама тытӑнчӗ.

— Эпӗ вут çинче выртнӑ пек выртӑм... Хӗрарӑм хам паталла çывхарнӑ май, ӑна пит лайӑх куракан пултӑм эпӗ: унӑн шурӑ тутри ӗнси çинелле анса ларнӑ, çӳçӗсем сапаланса çилпе вӗлкӗшме тытӑнчӗç, питçӑмартийӗсем тӑрӑх куççулӗ юхать... Тахӑш самантра бинокле куç патӗнчен илсе хамӑн боецсем çине пӑхрӑм та, вӗсем пурте, нимӗççен пульлисенчен асӑрханмаллине манса кайсах, пуçӗсене çӳлелле çӗкленине куртӑм—вӗсем пурте çав хӗрарӑм çине куç ил-

мееёр пăхаççĕ иккен... Çитет-и вăл пирĕн пата, çитеймест-и? Ах, çиттĕрччĕ, ах, ан лектĕрччĕ ăна!—тенĕ ĕнтĕ кашниех...

— Нимĕçсем çаплах печĕç, пур енчен те печĕç ăна. Пулемётсенчен çеç мар, миномётсенчен те кĕрслеттерме тытăнчĕç вĕт, сволочьсем! Акă, пĕр мини унран инçетрех те мар вăркăнса çурăлчĕ. Хĕрарăм ӳкрĕ. Вилчĕ, пĕтрĕ,—терĕм эпĕ... Çук, вилмен иккен... Каллех тăчĕ, каллех чупа пуçларĕ. Анчах паçăрхи пек хăвăрт чупаймарĕ вăл, пĕр енчен тепĕр еннелле сулăнса кайрĕ, çавăнпа та ачи те çĕр çийĕн сĕтĕрĕнсе пычĕ. Ачин пичĕ—чĕп-чĕр юн, вăл чĕрри-виллине те уйăрса илмелле мар... Хĕрарăм пирĕн пата çитесси пĕтĕмпе те пĕр çĕр метр çеç юлчĕ, анчах та вăл çак вилĕм хирĕ урлă чĕррĕнех каçса çитес шанчăк пит сахал пулчĕ çав,—нимĕçсем хытăран хытă печĕç. Вĕсем ăна епле пулсан та вĕлермех тăрăшрĕç... Вара мĕнле пулнине астумастăп, анчах та эпĕ çак самантра хамăн куççульсем юхса аннине туйса илтĕм... Ăнланатăр-и çавна? Эпĕ, ватă салтак, хам пурăнăçра тем те пĕр курнă çын, макăрса ятăм вĕт. Салтак чунĕ те чăтаймасть иккен тепĕр чух!

— Вперёд, в атаку!—хытă кăшкăрса команда патăм та вара эпĕ, хамăн боецсем вырăнтан тăни-тăманни çине пăхмасăрах малал-

ла, çав ачаллă хĕрарăм патнелле ыткăнтăм... Эпĕ хăйĕн еннелле чупнине курсан, вăл та ман паталла чупрĕ. Темиçе самантран эпĕ ăна ачи-мĕнĕпех ыталаса илтĕм...

— Тăвансем, тăвансем... Юлташсем, çăлăр!—теме çеç пултарчĕ вăл, унтан, халран кайса çитнипе, çавăнтах ӳкрĕ.

— Нумайăн-и вĕсем?—кăшкăрса ыйтрăм эпĕ хăвăртрах ун патне кукленсе.

— Виççĕр çынна яхăн пулĕ... Ултă тупă, вунпĕр пулемёт, вунă миномёт...—Хĕрарăм ниепле те сывлăш çавăрса илеймерĕ.

— Халех вĕсем пĕри те пулмаççĕ!—каллех кăшкăртăм эпĕ ăна илттерме тăрăшса, мĕншĕн тесен пирĕнтен темиçе метрта кăна пысăк мина ӳксе çурăлчĕ. Осколоксем хăлха çуммипех чашкăрса иртсе кайрĕç.—Эсĕ вырт çак воронкăра, кайран килĕпĕр сан патна!

Нимĕн те хăрушă пулмарĕ пирĕншĕн... Эпĕ хĕрарăмпа темиçе сăмах хушнă вăхăтра манăн боецсем ялăн анкартийĕсем патнех çитме ĕлкĕрнĕ. Чарусăр хаярлăхпа штурмласа кĕрсе кайрăмăр вара эпир çак яла. Боецсем пуринчен ытларах винтовкăсенчен, автоматсенчен персе мар, штыкпа, прикладпа, çумри кинжалсемпе ĕçлерĕç. Траншейсемпе окопсенче нумай нимĕçсем аллисене çĕклеНине куртăм эпĕ, анчах вĕсене пĕрне те каçару пулмарĕ. Виççĕр чĕрĕ фашистран пĕр

сехет хушшивче виççĕр виле пулса тăчĕ. Ултă тупă, вунпĕр пулемёт, вунă миномёт—тĕп-тĕрĕссипе!—пирĕн алла лекрĕç, çав кунах вĕсене хирĕç пеме тытăнчĕç.

Майор калама чарăнчĕ. Пĕр вăхăт палатăра никам çук пекех пулчĕ. Эпир майорăн калавне итлесе тĕлĕннипе шарламарăмăр, вăл хăй çавăн чухне ĕççем мĕнле пулса иртнине аса илсе, тăруках лăпланаймарĕ пулас. Чылайран, вăл çĕнĕ пирус чĕркесе тивертсен тин, сăмах тепĕр хут пуçланчĕ.

— Çапла вăл салтакăн чунĕ,—терĕ майор.—Çиелтен пăхсан çеç хытса ларнă пек туйăнма пултарать... Шаларах кĕрсе пăхсан—урăхла иккен, пачах урăхла! Вăл çав тери юратма та пултарать, вĕçĕмсĕр савăнма та пĕлет, хурланни те пулать унăн. Ну... курайманлăх енчен илсен—салтак чунне никам чунĕ те çитмест çав... Салтак чĕринче курайманлăх вĕреме пуçласан—тытăнса кăна тăр вара!

Каллех пĕр хушă шарламасăр лартăмăр. Чĕрене кĕрсе ларнă тĕрĕс сăмаха хирĕç мĕн калăн?

— Леш хĕрарăма кайран куртăр-и?—ыйтрĕ унтан лейтенант.—Кам пулнă вăл?

— Эпир ăна ачи-пăчипех госпитале ăсатрăмăр,—терĕ майор.—Хăй вăл çав ялти учительница пулнă, упăшки Хĕрлĕ Çар коман-

дирĕ пулнăшăн вĕлересрен хăраса, нумай вăхăт нимĕçсенчен подвалта пытанса пурăннă. Эпир çывхарса çитнине курсан вара—тарма шут тытнă... Тахçанччenex аса илсе пурăнтăмăр ăна. Эпир пĕрмай малалла кайса пытăмăр, нумай ялсемпе хуласене нимĕçсенчен тасатса ирĕке кăлартăмăр, анчах та çăлăнăç шыраса пирĕн пата вилĕм витĕр чупса пынă икĕ ачаллă хĕрарăм сăнĕ—пĕрмаях куç умĕнче тăчĕ...

1943, июнь.
Курск облаçĕ.

# КАТЮША*

1.

... Пĕлетпĕр: пилĕк сехетре артподготовка пуçланмалла. Кăна пире командирсем каçах каласа пачĕç, çавăнпа та эпир халь тек-текех командлăй пункт еннелле çаврăна-çаврăна пăхатпăр. Унта, пиртен хĕвелтухăçнелле пĕр икĕ çухрăмра, ирхи шупка тĕтре витĕр вĕтĕ вăрман курăнать, вăрман леш енчен юн пек хĕрлĕ шурăмпуç çĕкленет. Ун çуттинче пĕлĕт таткисем сывлăшра хытса ларнă вут çулăмĕсем евĕр йăлкăшаççĕ; вăрман тăррин авкаланчăк йĕрĕ таçта çитиех тăсăлать. Çав енчен ĕнтĕ наступлени пуçламалли сигнал памалла.

---

*) Калавăн малтанхи вариантне Владислав Агаков çырнă.

Эпир, хамӑн ҫывӑх тус Алеша Поповпа иксӗмӗр, тарӑн траншейӑра чӗлӗм туртатпӑр. Чӗлӗм вутне пытарма халь кирлӗ мар пулин те, фронтри йӑлапа иксӗмӗр те пируссене алтупанӗсемпе картланӑ. Вӑхӑт — октябрь уйӑхӗ, ҫанталӑк ирсерен самаях сивӗтет, шинель айне кӗрсе пӗтӗм шӑмма-шакка ҫӳҫентерет. Тен, эпир кӑрт-кӑрт чӗтресе илни хамӑр пӑлханнинчен те килет пулӗ...

Пиртен виҫҫӗр метр малта—нимӗҫ окопӗсем. Виҫӗ ретлӗ йӗплӗ пралук карти хыҫӗнче, пирӗнни пекех тарӑн траншейӑсенче, нимӗҫсем вырнаҫнӑ. Ку—вӗсен оборонин пӗрремӗш линийӗ. Ун хыҫӗнче—пӗринчен пӗри ҫӳллӗрех—иккӗмӗш тата виҫҫӗмӗш линисем пур. Эрне хушши ӗнтӗ эпир кунта тӑшманпа хире-хирӗҫ тӑратпӑр. Нимӗҫсем пирӗнтен чылай ҫӳлте, сӑртлӑ вырӑнта, ҫавӑнпа та вӗсене кунтан ҫапса кӑларма чылай хатӗрленме кирлӗ пулнӑ.

Нимӗҫсен енче шӑп... Ирхи вӑхӑта кура пулемётсем те пемеҫҫӗ, миномётсем те шарламаҫҫӗ. Вӑхӑтран вӑхӑта ҫеҫ темиҫе автоматчик—дежурнӑйсем пулас—автоматсемпе кӗскен шӑтӑртаттарса илеҫҫӗ.

— Ракета!—сасартӑк кӑшкӑрчӗ пӗри пирӗнтен сылтӑмра.

Эпир вӑртах каялла ҫаврӑнса пӑхрӑмӑр. Хӑвӑрт ҫаврӑннипе Алёшӑн пилотки хӑлхи

çинě шуса анчě. Вăл ăна сар çўçлě пуçě çине лаплаттарса тăхăнчě те, ракетăсем вěçнě тěлелле куçне сиктермесěр пăхма тытăнчě. Унта виçě хěрлě ракета, хăйсем хыççăн çур унка евěр хěмлě йěрсем хăварса, çěрелле вăраххăн вěçсе анчěç.

Çав самантрах тупăсем пеме тытăнчěç, халиччен куçа курăнман вăтăр, аллă (кам пěлě вěсен шутне) тěрлěрен калибрлă орудисемпе миномěтсем ухлатса сывлăша чěтретме пуçларěç. Ку ěнтě—артподготовка...

Снарядсемпе минăсем пирěн пуç урлă шăхăрса, ўлесе е чашкăрса иртеççě те, нимěçсем вырăнаçнă сăрт çинче пěрин хыççăн тепри çурăлса çěре кисрентереççě.

— Халех „катюша" выляма кирлě,—тет Алěша Попов.

Вăл сўннě пирусне çăварěнчен пăрахма та маннă, йăлтăртатакан куçěсемпе пěрре малалла, снарядсем çурăлса тăпрана сирпěнтерне çěре, тепре каялла, оруди вучěсем йăлт! йăлт! çиçнě тěлелле пăхать.

Чăн та, темиçе самантран пирěн хыçра, командăй пункт вырăнаçнă енче, пирěн юратнă „катюша" хăватлăн та çěнтерўллěн кěрлесе кěмсěртетни илтěнчě.

— Ах, катюша!

— Выля, Катька! Çěмěрттер хытăрах!

—Ăшала фрицсене! Çунтар!—илтĕнчĕç унта-кунта боецсем кăшкăрнă сасăсем.

Мĕнле боецăн чĕри хытăран хытă тапман пулĕ, камăн чунĕ çунатланман пулĕ „катюша“ пенине илтсен? „Катюшăна“ чун савнипе пĕрех ытараймасăр юратаççĕ, ун çинчен юрăсем юрлаççĕ, ăна ытти орудисемпе танаштарса „катюша перет“ те темеççĕ, „катюша вылать“,—теççĕ...

Халь те, „катюшăсем“ пенине çĕр хутчен илтнĕ, курнă пулсан та, эпир вĕсен еннелле куç илмесĕр пăхса тăтăмăр. Пирĕнтен пĕр икĕ çухрăмри çырмаран хĕп-хĕрлĕ, вутлă сăнăсем пĕрин хыççăн тепри вĕçсе тухаççĕ те, çиçĕм пек хăвăрттăн çиççе тӳпенелле улăхса çухалаççĕ. Ку—вутлă йĕр хăваракан, паттăрăн ухлатса тухакан „катюша“ снарячĕсем. Вĕсем васкавлăн, пĕри теприне хăваласа иртесшĕн пулнă пек, тимлесе вĕçеççĕ. Кам пĕлет, миçе снаряд тухса ыткăнчĕ пуль „катюша“ пĕр минута яхăн „выляна“ хушăра?

Акă, вутлă сăнăсем вĕçсе тухма чарăнчĕç, „катюша“ пенĕ тĕлте пĕлĕт евĕр хура тĕтĕм çеç юлчĕ. Тепĕр самантран унăн снарячĕсем нимĕçсем вырăнаçнă пирĕн умри сăрта калама çук пысăк çапуççисемпе авăн çапнă пек тӳпкеме тытăнчĕç. Унта та кунта çурăлакан снарядсен тĕтĕм куписем талкишпех ӳссе лар-

чĕç: сăрт çинче сасартăк таçтан, çĕр тĕпĕнчен, пысăк та хура пахча сиксе тухрĕ, тейĕн. Пĕтĕм сăрт тусанпа хутăш тĕтĕм айне путрĕ.

Нимĕç окопĕсенчен никам та пире хирĕç ответ параймасть. Вĕсем пурте ăнран тухса кайса, шăтăксенче шăшисем пек лăпчăнса выртнă курăнать. Инçетрен перекен орудисем кăна, тĕл пеме пултараймасăр, снарячĕсене унта та кунта ывăтаççĕ.

Акă, пирĕн хыçра моторсем кĕрлени илтĕнсе кайрĕ, вĕсен пĕтĕм тавралăха сарăлакан хаяр шавĕ çывхарнăçемĕн çывхарса пырать. Пирĕн танксем, ку таранччен вăрманта пытанса тăнăскерсем, халь пирĕн паталла хыттăн ĕрлесе, чăнкăртатса хăвăрттăн шăваççĕ. Вĕсен гусеницисем айĕнчен тусан мăкăрланать, хирти типнĕ курăк вĕçет; вĕсен башнисем хыçĕсене улăхса ларнă автоматчиксен симĕс каскисем курăнаççĕ. Тепĕр вунă минутран танксем пирĕн траншейăсем урлă каçса малалла, нимĕç окопĕсем еннелле ыткăнчĕç.

— Мелкими группами, вперёд!—команда килчĕ траншея тăрăх. Пирĕн отделени командирĕ, çамрăк сержант Краснов, окопран бруствер çине сиксе тухрĕ те хыттăн кăшкăрчĕ:

— Вперёд, братцы, за мной!

Траншейăран вăшт кăна сиксе тухса, винтовкăсене „на-перевес“ тытса, сержант хыççăн чупатпăр. Пирĕн умра—кĕмсĕртетсе, хăйĕн йывăрăшпе çĕре такăрлатса, танк ыткăнса пырать. Ман шинелĕн кашни кĕсъинче—икшер граната, вĕсем чупнăçемĕн пĕçĕсене çапăнаççĕ, анчах вăл пĕртте кансĕрленĕн туйăнмасть. Наступлени хăвачĕ чуна çĕклентерет, урасене тата хытăрах чуптарать. Пуçра лĕр шухăш кăна: „Малалла! Танкран юлмалла мар!“ Манран сылтăмра Алёша Попов çăмăллан та вирлĕн чупса пырать, унăн пилоткăна нихçан пăхăнман сарă çӳçĕсене çил вĕлкĕштерет...

Пехота атака пуçланă май, артиллеристсем прицелне пысăклатса, нимĕç укреплениййĕсен иккĕмĕш те виççĕмĕш линисене çĕмĕрме тытăнаççĕ. Орудисен сассине хупласа, хыçалта каллех „катюша“ хăватлăн кĕмсĕртетет. Малти окопсенче юлнă фрицсем, ку таранччен шарлама хăйманскерсем, артиллери вучĕ хыçалалла куçнине кура, пуçĕсене çĕклерĕç: вĕсен винтовкисемпе пулемĕчĕсем, автомачĕсем пире хирĕç пульăсем сапма тытăнчĕç. Минăсем тискеррĕн ӳлесе пырса, шарт та шарт! çурăлаççĕ. Анчах, пирĕн танкистсем вĕсене йĕркеллĕн тĕл пеме памаççĕ: пирĕн танксен тупписемпе пулемĕчĕсем, татти-сыпписĕр персе пырса, пире хирĕç тăма никеннĕ

нимĕçсĕне е çавăнтах ӳпĕнтереççĕ, е каялла пытантараççĕ.

Çĕр çумнерех пĕшкĕнсе, эпир танкран юлмасăр чупатпăр, чупнă çĕртех перетпĕр. Чĕре кăкăртан сиксе тухас пек тапать, сывлама йывăр, çурăм тăрăх вĕри тар юхать. Анчах çĕнтерӳ çывăххи пурне те мантарать...

... Йĕплĕ пралук карти патне те çитрĕмĕр ĕнтĕ. Танк хăйĕн тимĕр кăкрипе ун çине пырса выртать те, шăтăр шатăрах çĕмĕрсе пăрахать.

— Малалла! Пĕр чарăнмасăр малалла!

Нимĕç окопĕсем—хĕрĕх метрта. Унта нимĕçсен хурçă каскисем вĕлтлетни паллăнах курăнать ĕнтĕ. Фрицсем, хупăрласа илнĕ кашкăрсем евĕр, унталла-кунталла ним йĕркесĕр чупма тытăнчĕç. Акă вăл, тискер кайăк йăхĕ, çывăхрах, куç умĕнчех! Тăшмана куçпа курни чĕрене тата ытларах хытарать, алăри винтовкăна çирĕпрех чăмăртаттарать.

— Ура-а-а!—янраса килет кассăн-кассăн сылтăм флангран атакăлакан пехота кăшкăрни.

— Ура-а-а!—хутшăнатпăр эпир те нумай кăкăрсенчен янраса тухнă, чуна çĕклекен сасă çумне.

Гранатăсене кăларса умлă-хыçлă нимĕçсен окопнелле ывăтатпăр. Хура тĕтĕмлĕ взрывсем унта та кунта тăпрана сирпĕтеççĕ, чупакан

нимĕçсене персе антараççĕ. Тепĕр самантран эпир тăшманăн окопне сиксе те антăмăр; фрицсен виллисем урлă сике-сике каçса, тараканнисене хăваласа, малалла ыткăнатпăр...

2.

... Эрех кĕленчисем, кĕмĕл черккесем, кашăксемпе вилкăсем, арçын кĕпе-йĕмĕ, хĕрарăм кĕпе-йĕмĕ, çытарсем, утиалсем, пушмаксем... Мĕн кăна тултса тултарман пуль фрицсем хăйсен блиндажне! Блиндаж мар—арлан йăви, тейĕн. Эпир хамăра кирлĕ мар пур ăпăр-тапăра кăларса ывăтса, блиндажа вырăнаçатпăр. Çывăрма тунă сарлака сак çинче, утиялсемпе шинельсен купи айĕнчен, сасартăк перламутрпа илемлетсе пĕтернĕ çĕнĕ аккордеон туртса кăлартăмăр. Ăна тӳрех Алĕша Попов çавăрса тытрĕ, турткаласа унăн сассине тĕрĕслесе пăхрĕ.

— Чип-чиперех, ачасем!—терĕ вăл савăнăçлăн.—Çитрĕ пире ташламаллăх! Чăн-чăн „Морелли“! Тĕнчипе паллă фирма!

Апат çинĕ хыççăн, нимĕçсем пăрахса хăварнă çуртасене çутса, блиндажа пухăнса ларатпăр. Ывăнни те, çывăрас килни те иртсе кайрĕ ĕнтĕ, пурин те музыка пур чух çĕнтерӳ ячĕпе юрăсем юрлас, савăнас килет.

Алёша Попов хăйĕн çивĕч, ăста пӳрнисемпе тĕрлĕрен кĕвĕсем шăрантарать. Кашни çынăннах хăй юратнă, ытти юрăсенчен ытларах килĕшнĕ пĕр юрă пур, кашниех ăна пӳринчен малтан калаттарасшăн. Украинец Опанас Пилипенко, пысăк пӳлĕ те вăйлă çын, аллине купăс çине хурса Алёшăна чарчĕ те:

— Кӳр-ха, ман юратнине яра парар...— терĕ.—„Распрягайте, хлопци, коней...“

Алёша Украина халăх юррин илемлĕ кĕввине çемçен вылямa тытăнать. Кĕвĕпе пĕр май Опанас вăйлă та хулăм сассипе юрра пуçласа ярать. Вăл юрланă чух пуçне çӳлелле çĕклет, çурри хупăннă куçĕсем тепĕр хут çавракаланса таçта инçетелле тинкерсе пăхаççĕ. Тен, çав самантра вăл инçетри тăван салине, симĕс пахчасем хушшине путнă илемлĕ шурă пӳртсене аса илет пулĕ...

Унтан Алёша сасартăк, никам ыйтмасăрах, „Катюшăна“ шăрантарма тытăнать. Ку—вăл хăй юратнă юрă. Хаваслă, кашниех пĕлнĕ кĕвĕ, пурне те чĕререн тивет. Эпир пурте пĕр харăс çамрăк та янравлă сасăсемпе юрлама пуçлатпăр. Ку юрра пурте юратаççĕ, ун çĕнĕ сăмахĕсем фронтра, боецсем хушшинче çуралнă; вĕсем фронтри „катюша“— пирĕн чаплă, мухтавлă „катюша“ çинчен калаççĕ, ăна саваççĕ. Вунпилĕк çамрăк сасă

юрра хавассăн шăрантараççĕ... Алĕшăн çивĕч пӳрнисем хăвăрт вылянса, тĕлĕнмелле переборсем туса, кĕвве тĕрлĕ май илемлетеççĕ, хăлхана çав тери ачашлаççĕ. Янрать, чĕрене савăнтарать пирĕн юрă...

„Разлетались головы и туши,
Кровь фашистов полилась рекой:
Эта наша русская „катюша“
Немчуре поёт за упокой!„“

Юрă пĕтрĕ. Алёша пӳрнисем клавишсем тăрăх çӳлтен аялалла чупса анчĕç те, кĕске аккорд тунă хыççăн кĕвве вĕçлерĕç. Унтан вăл аллисене клавишсенчен уйăрса аккордеон корпусĕ çине хучĕ те, сасартăк шухăша кайрĕ.

— Эх, Катюша...—терĕ вăл ассăн сывласа илсе.

Алёша кама аса илнине, мĕн пирки тăруках салхуланнине эп аванах пĕлтĕм.

Пĕлмесĕр ара! Çулталăк хушши çапăçу хирĕсенче вилĕме хирĕç юнашар пыни, вăрçă çулĕсем тăрăх пин çухрăма яхăн пĕрле çуран утни, пĕр котёлокран апатланни, тепĕр чух юлашки çăкăр татăкне те çурмалла хуçса çини—пире çав тери тачă, нихçан уйрăлми туслăхпа ĕмĕрлĕхех пĕрлештерчĕ. Фронт вăл çынсене калама çук çывхартать, фронтри тус—чи хаклă тăванран та çывăх тус. Çул-

талăк хушшинче эпир Алёшăпа тем çинчен те каласса пăхнă пулĕ. Чĕрери чи хаклă ĕмĕтсене, чи вăрттăн шухăшсене те пĕрпĕрине пĕлтернĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ Алёшăн пĕтĕм пурăнăçне те, вăл халь кăна асăннă Катюша кам иккене те пит аван пĕлетĕп эпĕ.

...Эпир Алёшăпа туслашма пуçласанах, вăл мана хăйĕн тăван ялĕнче, Курск облаçĕнче, Катюша ятлă савнă хĕр юлни çинчен каласа пачĕ. Гимнастĕркăн сулахай кĕсъинчен, чĕри çумне комсомол билечĕпе юнашар хунă сăнӳкерчĕкĕ кăларчĕ те, малтан хăй ун çине йăвашшăн пăхса илсе—мана кăтартрĕ.

— Акă вăл, манăн Катюша...

Эпĕ карточкăна тинкерсех пăхрăм: самаях хитре хĕр, пысăк хура куçĕсем чеен, сасартăк питĕ кулăшла япалана аса илнĕ пек йăлтăртатса пăхаççĕ, илемлĕ тутисем вĕтĕ те тикĕс шăлĕсене кăтартса кулса тăраççĕ. Катюша сăнне кура, ман чун кăштах хурланчĕ: манăн килте çакăн пек хам юратакан, эпĕ таврăнасса кĕтекен хĕр çукки салхуллатрĕ мана.

Анчах та, иккĕмĕш çул ĕнтĕ нимĕçсем Алёшăн тăван ялĕнче хуçа пулса пурăнаççĕ. Алёша хăй тăванĕсем çинчен те, Катюша çинчен те нимĕн те пĕлмест. Фашистсен пусмăрĕнче ашшĕ-амăшĕпе, юратнă хĕрĕпе мĕн

пулма пултарни çинчен шухăшлаçа, питĕ пăлханатчĕ вăл.

Акă Хĕрлĕ Çарăн 1943-мĕш çулхи хĕллехи наступленийĕ пуçланчĕ. Эпир те хамăр участокра нимĕçсене хăваласа, малалла куçса пытăмăр, радиопа хаçатсем тăрăх ытти фронтсенче те пирĕннисем ял хыççăн яла, хула хыççăн хулана ирĕке кăларни çинчен пĕлсе тăтăмăр. Алĕшăпа иксĕмĕр пуринчен ытла Курск облаçĕнче наступлени епле пынине сăнаттăмăр. Алĕша кашни кунах карттă тăрăх хăйсен районне çитме миçе километр юлнине виçетчĕ; километрсен шучĕ сахалланса пыни унăн хаваслăхне кунран-кун ÿстеретчĕ.

— Тата утмăл çухрăм!—Тепĕр виçĕ кунтан пирĕн района çитеççĕ! Эх, хам унта пулсанччĕ!..

Радио Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Льгов хулине илни çинчен пĕлтерчĕ. Алĕша ку хаклă хыпара пĕлсен, савăннипе пĕр вырăнта лараймасăр, пĕр юлташ патĕнчен теприн патне чупса çÿрерĕ.

— Урра, Льгова ирĕке кăларнă! Ман района!

Пурте, Алĕшăпа пĕрле чунтан савăнса, ун аллине чăмăртарĕç. Çав кунах Алĕша хăйĕн килне темиçе çыру çырса ячĕ.

Тепĕр уйăхран икĕ çыру пĕр харăс таврăнса килчĕç ун патне: пĕри—амăшĕнчен, тепри—

Катюшăран. Вĕçĕмсĕр телейлĕ Алĕша хăш çыруне малтан уçас-ши, тесе пĕр самант иккĕленсе тăчĕ... Унтан амăшĕн çыруне уçса вулама тытăнчĕ.

Анчах, вуланă май, унăн сар хĕвел пекех савăнăçлăн çутăлакан сăнĕ тĕксĕмленсе, шуралса пычĕ, куçĕсем çилĕллĕн пăхма тытăнчĕç. Иккĕмĕш çыруне вуласан, вăл тата ытларах салхулланса кайрĕ. Ним шарламасăрах вăл окопран тухрĕ, çырма тăрăх туратлă вată юман еннелле хуллен утрĕ. Юман кутне, халь çеç юртан тасалнă нӳрĕ çĕр çине ларчĕ те, тарăн шухăша кайрĕ. Эпĕ Алĕша йывăр хыпарсем илнине ăнланса, ун патнелле çывхартăм. Пĕр сăмах чĕнмесĕрех, вăл мана çырусене тыттарчĕ.

Акă мĕн çырнăччĕ вată амăшĕ Алĕша патне:

„*Хаклă ывăлăм Алĕша! Паян сан çыруна илтĕм те, эс чĕррине пĕлсен тӳсеймесĕр макăрса ятăм. Эпĕ сана халиччен вилнĕ те пуль, çĕр çинче тăр пĕччен тăрса юлтăм пуль, тенĕччĕ. Малалла та сана тăшман пульли ан тивтĕр, тесе, халь кашни куллене кĕлтăватăп ĕнтĕ.*

*Юратнă ывăлăм, аçу текех çук ĕнтĕ. Пĕрре комендант патне, халăх колхоз тыррине ăçта пытарнине тĕпчесе пĕлме, пилĕк старике чĕнчĕç. Çав шута аçу та лекрĕ. Нимĕçсене ним те каламаншăн вĕ-*

*сене пиллĕкĕшне те ăнран кайиччене хшомполсемпе хĕненĕ. Ун хыççăн аçу виçĕ кун та пурăнаймарĕ, асапланса вилчĕ.*

*Тата акă мĕн пĕлтеретĕп сана: Ленăна вăйпах Германие илсе кайрĕç, унпа пĕрле— ялти нумай çамрăк ачасемпе хĕрсене, çĕр çынна яхăн. Соколов Петькине, тарса пытаннăшăн, персе пăрахрĕç. Çапла вара пĕр эрне хушшинчех аçуна та, йăмăкна та çухатрăм. Халĕ эсĕ сывă пулни кăна пурăнма шанчăк парать мана, ывăлăм. Килте ниепле выльăх та, нимĕнле кайăк-кĕшĕк те çук. Пӳрте те нимĕçсем хăйсем тухса тарас умĕн çунтарса ячĕç. Ялта пĕтĕмпе те çичĕ кил кăна тăрса юлчĕ: вĕсем те, хамăр боецсем çитсе пушара сӳнтерме пулăшман пулсан, пĕтетчĕç. Халь эпĕ Митрофан карчăкĕн килĕнче пурăнатăп.*

*Акă епле хĕнхур курмалла пулчĕ ватăлăхра, юратнă ывăлăм. Ун пек пулассине ĕмĕрте те шутламан, тĕлĕкре те курман. Сывă пул, Алĕша. Малашне те телей пултăр сана.*

***Санăн юратакан аннӳ“.***

Иккĕмĕш çыруне шултăра, чăмăр саспаллисемпе вирлĕн пусса çырнă.

*„Чунăм Алĕша! Сан çыруна илсен мĕн тери савăннине нимĕнле сăмахпа та ка-*

*ласа пама çук. Каллех ирĕклĕх таварăнни тата эсĕ те сывă пулни—маншăн вĕçĕмсĕр пысăк телей.*

*Нимĕç пусмăрĕнче эпир мĕн-мĕн тӳснине йĕркипе çырса пĕлтерме—çĕр листа хут та çитес çук. Нимĕçсем яла килсе кĕрес умĕн ман атте партизан отрячĕпе вăрмана тухса кайрĕ, эпир килте аннепе иксĕмĕр çеç юлтăмăр... Яла виçĕ кун хушши çаратнă, вĕçĕмсĕр ашкăннă хыççăн, çĕнĕ „хуçасем" ялта староста лартрĕç. Кама лартрĕç, тетĕн пуль? Леш хайхи Купцов Ивана, тракториста вĕлернĕшĕн тĕрмере ларнăскерне. Çав Купцов вара коменданта пирĕн атте партизан иккенне пĕлтернĕ те, лешĕ хушнипе пирĕн пата нимĕç салтакĕсене ертсе пычĕ. Вĕсем аннене тытса кайрĕç, пӳрте вут тĕртсе хăварчĕç, а мана... мана мĕн тунине калама чĕлхе çаврăнмасть... Çав каçах эпĕ ялтан вăрмана, партизансем патне тартăм. Темиçе кунран эпир аннене вĕлерни çинчен пĕлтĕмĕр...*

*Мĕн чухлĕ хĕнхур, мĕн чухлĕ асап кăтартрĕç пуль вĕсем пирĕн ялта. Анчах та хăйсен ирсĕр ĕçĕсемшĕн вĕсем пире хăйсен хура юнĕпе тӳлерĕç! Эпир вĕсене кашни каçах хăюллăн тапăнни, салтакĕсене тыта-тыта пăвни, поездсене виктерни вĕсене канлĕн пурăнма памарĕ.*

*Алёша! Халь, паллах ĕнтĕ, пирĕн хушăра юрату пулма пултараймасть... Темĕнле йывăр пулсан та, манăн хĕр телейĕ ҫинчен манас пулать. Сан ҫыруна вуланă чух мана вăрҫăчченхи, эс килте чухнехи вăхăт аса килчĕ. Эпир ун чух час-часах тĕл пулаттăмăр, эпир пĕрле ирттернĕ самантсем ҫавтери телейлĕччĕ... Астăватăн пуль, Алёша?*

*Ҫук, ман халь ун пек ĕмĕтсемпе чĕрене ҫемҫетме юрамасть. Манăн чĕре хурҫă пек ҫирĕп пулмалла, мĕншĕн тесен ман халь пурăнăҫра пĕр ҫул кăна: тăшманпа виличчен кĕрешесси. Эпĕ, Алёша, снайперсем хатĕрлекен шкула ҫырăнтăм. Часах ак фронта кайăп, унта вара тăшманăн тискер кайăкла чĕрисене пуля хыҫҫăн пуля ярса хамран мăшкăлланăшăн та, аннен асапĕсемшĕн те тавăрăп.*

*Сывă та савăнăҫлă пул, Алёша.*

***Катя.***

Тепĕр кунне ирех Алёша Катя патне ответ ҫырчĕ. Ĕнерхи салху шухăшсем унăн сирĕлнĕччĕ ĕнтĕ, хуйхă выранне курайманлăх та ҫилĕ ҫеҫ юлнăччĕ.

Ҫыруне вăл кĕскен кăна ҫырнăччĕ:

*„Юратнă Катюша! Эсĕ пит маттур та ăслă хĕр, анчах хăш чухне ухмахла сăмах-*

*сем калатӑн. Ман юрату ҫав инкекшӗн пӗтме пултарать-и вара? Паллах, пирӗн иксӗмӗрӗн те — пысӑк хуйхӑ, анчах эпир пуҫа пӗртте усас ҫук. Хӑюллӑн кӗрешсе, тӑшмана ним шеллемесӗр пӗтерсе, хамӑршӑн та, тӑвансемшӗн те тавӑрӑпӑр, а вӑрҫӑ пӗтнӗ хыҫҫӑн — сывӑ юлсан — каллех пӗрлешсе ҫӗнӗ телейлӗ пурӑнӑҫпа пурӑнма пуҫлӑпӑр. Унччен пурӑнса ҫитерейместен — ыттисем телейлӗ пулӗҫ; тӑшмана пӗтерессишӗн пуҫа хума та шел мар.*

*Ан кулян, ҫирӗп кӑмӑллӑ пул.*

*Санӑн Алӗша.*

Ҫав кунран пуҫласа Алёша, унччен те пит хӑюллӑскер, ҫапӑҫусенче ҫавтери харсӑрланса кайрӗ. Атакӑсенче вӑл чи малта пырать, тӑшман окопӗсене пуринчен малтан ыткӑнса ҫитсе, нимӗҫсене, плена илес йӑлана пӑрахса, гранатӑпа, штыкпа е прикладпа пӗтерет.

Катюша тахҫанах фронтра ӗнтӗ: сайра хутран килекен ҫырусенче нимӗҫсене кунран-кун ытларах пӗтерсе пыни ҫинчен хавасланса пӗлтерет. Юлашки ҫырура сакӑрвунулттӑмӗш фрица персе антартӑм, тесе ҫырнӑччӗ.

## 3.

Каллех хӑватлӑ артподготовка...

Нимӗҫсем леш рубежран аллӑ километр таран чакса, каллех сӑрт ҫинче, пирӗнтен чылай ҫӳллӗ вырӑна ҫирӗпленсе ларнӑ халь. Вӗсене атакӑлас тесен, пирӗн самаях сарлака юханшыв урлӑ каҫас пулать, унтан—икҫӗр метра яхӑн сӑрт тӑрӑх ҫӳлелле хӑпармалла. Задача—ҫӑмӑл мар... Пуринчен ытла пире ту ҫинче вырӑнаҫнӑ, пирӗн еннелле икӗ пулемӗтран пӗрмай пуля сапакан дзот кансӗрлет.

Пирӗн сержант Краснов, взвод командирӗ чӗннипе кайнӑскер, артподготовка пуҫлансанах каялла таврӑнчӗ те, пире виҫҫӗмӗре: Попова, мана тата Опанас Пилипенкона хӑй патне чӗнсе илчӗ.

— Акӑ мӗнле задача лартнӑ пирӗн умма,— терӗ вӑл.—Сӑртӑн сылтӑм енче виҫӗ ҫара йывӑҫа куратӑр-и?

Эпир вӑл аллипе кӑтартнӑ еннелле пӑхрӑмӑр. Унта, сылтӑмалла чалӑшшӑн анакан сӑрт ҫинче, виҫӗ хӑрӑк йывӑҫ курӑнать. Вӗсен тураттисене снарядсем хуҫа-хуҫа пӗтернӗ, йывӑҫсенчен хура вуллисем тата темиҫе ҫара турат кӑна юлнӑ. Сӑрт хыҫӗнче, инҫетре, сенкер таса пӗлӗт илемлӗн йӑлтӑртатать, вӑл ҫак хура мӗскӗн йывӑҫсенчен ҫавтери раснан курӑнать.

— Çав йывăççенчен аллă метр сулахаялла,—тет пирĕ Краснов,—нимĕççен дзочĕ. Атака пуçланиччен çав дзот патне çитсе ăна гранатăсемпе аркатас пулать.

— Пирĕншĕн ку пирвайхи хут мар. Икĕ çул ĕнтĕ çав ĕçпе ĕçлетпĕр,—тет куçĕсемпе кулкаласа Опанас, нихçан çăварĕнчен пăрахман чĕлĕмне тўлеккĕн ĕмсе.

— Сиктеретпĕр сывлăшалла,—тет Алёша, дзот еннелле пăхса.

Эпир подсумокри патронсене васкавлăн тĕрĕслетпĕр, пиçиххисенчен тата тепрер граната сумки çакатпăр.

— Рожков, эсĕ кунта ман вырăна юлатăн,—терĕ Краснов хăйĕн заместительне, шатрарах питлĕ ефрейтора.—Ну, кайрăмăр!

Окопран хăвăрт сиксе тухса анаталла, шыв еннелле чупатпăр, темиçе самантран эпир—шывра ĕнтĕ. Винтовкăсене çўлелле çĕклесе, шыва кăкăрпа çурса, васкаса утатпăр. Дзотрисем эпир каçнине асăрхарĕç пулас—пулемётсенчен пеме тытăнчĕç, пульăсем шыва çумăр пекех тăкăнаççĕ. Çапах та леш енне чиперех каçатпăр. Шыв леш енче—лапам вырăн, кунта пульăсем пире тивейместĕ, пуç çийĕпе шăхăрса иртеççĕ кăна. Лапамран сăрт патне çитнĕ тĕлте пуçа çĕклеме те çук: пульăсем çĕр çуммипе вĕçеççĕ, сарăхнă типĕ

куракă касаççĕ. Халь „по-пластунски“ çеç выртса шума пулать ĕнтĕ.

Пирĕн артиллери ку хушăра хăй ĕçне питĕ аван тăвать, снарядсем нимĕç окопĕсене сирпĕтеççĕ кăна. Орудисен музыкине хупласа, икĕ хутчен „катюша“ кĕмсĕртетрĕ. Эпир, пĕр-пĕринчен пилĕкшер метр аяккарах, артиллери хӳттипе малалла шуса пыратпăр. Типсе ларнă хир куракĕ пиге, алăсене чавать, аялти кĕпе тарпа йĕпенсе çурăм çумне çыпăçнă. Алĕша Попов манран сылтăм енче, куракă сирсе, яланхи пекех васкавлăн шăвать.

Дзот патне çывхарнăçемĕн çывхаратпăр, унăн пулемĕчĕсем, пире [illegible]ма пултараймасăр, антăхнă пекех шăтăртатаççĕ.

Акă, Алĕша хăвăртрах шуса манран мала иртрĕ те, сасартăк сулахай алли çине пусса кĕлеткине çĕклерĕ, сылтăммипе граната вăркăнтарчĕ. Вăйлă взрыв пĕр амбразуринчи пулемĕтне хупларĕ. Çав самантрах, сулахай енчен, Краснов тепĕр амбразурине граната печĕ, вара иккĕмĕш пулемĕчĕ те шарлами пулчĕ. Эпир, Опанаспа иксĕмĕр, вĕсем хыççăн тепрер граната вăркăнтартăмăр. Дзот пăчах шăпланса ларчĕ.

Унтан Алĕша сиксе тăчĕ те, сылтăм аллипе гранатăна чăмăртаса, дзот хыçнелле, унтан фрицсене тартас мар, тесе чупрĕ.

Анчах, вăл дзота кĕмелли траншея патне çитсенех, ăна хирĕç нимĕç автомачĕ кĕскен шатăртатса илчĕ. Алĕша сулăнса кайрĕ, çапах та ўкмерĕ, чĕркуççи çине кукленсе анчĕ çеç.

— А-а, сволочь!..—хаяррăн кăшкăрчĕ вăл. —Çук, хăтăлаймăн!..—Чĕркуççи çинче тăнипех, гранатине дзот алăкнелле ывăтрĕ те, унтан тухма пикеннĕ фрицсене çавăнтах персе антарчĕ.

Ку пĕтĕмпе те темиçе секунда хушшинче çеç пулса иртрĕ. Эпĕ чупса пынă çĕре, Алĕша бруствер тăпри çине пичĕпе тăрăнчĕ. Эпĕ ăна часрах çĕклесе çурăм çине çавăрса хутăм, суранне çыхас тесе шинельне вĕçертме тытăнтăм.

— Ан тив,—терĕ вăл вăраххăн. — Кирлĕ мар...

Ăна итлемесĕрех, эпĕ шинельне уçса унăн кăкрине пăхрăм. Пульăсем ун кăкрине темиçе çĕртен шăтарнă, гимнастĕрки çинче хĕрлĕ юн лаптăкĕсем курăнаççĕ... Пĕр юн лаптăкĕ шăп „Гвардия“ значокĕ айĕнче.

Эпĕ Алĕшăн кăкрине бинтпа çыхма пуçласанах, унăн куçĕсем аялалла, пирĕн позицисем еннелле пăхрĕç. Унта, дзот шарлами пулнине кура, окопсем мĕн тăсăлнă таранах, боецсем сике-сике тухса, шыв патнелле чу-

паççĕ. Алёша вĕсемпе сывпуллашнă пек, сӳнме пуçланă куçĕсемпе пăхать.

— Эс Катюшăна çырса пĕлтер,—терĕ вăл вăйсăр сасăпа.—Адрĕсĕ кĕсъере...

Сасартăк унăн тĕксĕмленнĕ куçĕсем вăйлăн йăлтăртатса илчĕç.

— Катюша... Катюша...—терĕ вăл.

Эпĕ каялла çаврăнса пăхрăм. Унта, пирĕн позицисем хыçĕнче, хĕрлĕ çулăмлă сăнăсем пĕрин хыççăн тепри вĕççе тухаççĕ те, тӳпенелле çиçĕм пек хăвăрт хăпарса çухалаççĕ. Вĕсем ыткăнса тухнă тĕлте нимĕнле оруди тавраше те курăнмасть; çĕр хăйне хăй вутлă вилĕм кӳрекен сăнăсене тăшман еннелле сапнăн туйăнать...

Эпир „катюшăн“ аслати пек хăватлăн та çĕнтерӳллĕн кĕмсĕртетекен сассине илтрĕмĕр.

Алёшăна ку паттăр сасă хăй халь çеç Катюшăна аса илни çине ответленĕн туйăнчĕ пулас. Вăл аллипе ман шинель çухавинчен çавăрса тытрĕ, çĕкленесшĕн пулчĕ, анчах çĕртен темиçе сантиметр уйрăлсанах каялла ӳкрĕ те хускалми пулчĕ. Унăн куçĕсем ĕмĕрлĕхех хупăнчĕç.

...Эпир Алёшăна çав сăрт çинчи, хамăр ирĕке кăларнă ял хĕрринчи, пысăк та сарлака çăка айне пытартăмăр.

Опанас Пилипенко, ăна пĕчĕк ачана çĕкленĕ пек çĕклесе хăпарчĕ те, çăка айне хучĕ.

Пĕтĕм рота Алёша валли хатĕрленĕ шăтăк умĕнче ретленсе тăчĕ. Эпĕ тусăма шăтăка антаричченех унăн пичĕ çинчен куç илмесĕр пăхса тăтăм.

Сăнĕ унăн пĕртте улшăнман, шуралнă кăна. Лăпкă çил, кĕрхи кун пулсан та ăшшăн та лăпкăн вĕрсе, унăн сарă, пилотка айне вырă-наçман çӳçĕсене хуллен вылятрĕ. Ватă çăкан сарăхнă çулçисем, тураттисенчен уйăрălса, пĕрин хыççăн тепри нӳрĕ тăпра çине ярăна-ярăна анаççĕ...

Батальон парторгĕ, хытă пăлханнă пирки, кĕске сăмах çеç каларĕ. Виçĕ залп, Алёшăна юлашки çула ăсатса, сывлăша умлă-хыçлăн чĕтретрĕ.

1943, сентябрь

ТУПМАЛЛИ


| | Стр. |
|---|---|
| Вилĕмрен те вăйлăрах . . . . . . . . . . . . | 3 |
| Салтак чунĕ . . . . . . . . . . . . . . | 70 |
| Катюша . . . . . . . . . . . . . . | 85 |



Редактор С. В. Эльгер

НТ 0090 . Подписано к печати 14/VIII 1947 г.
Объем 3,50 п. л. Тираж 5000 экз. Заказ 429

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности
при Совете Министров ЧАССР.

Цена 3 руб. 50 коп.

ЛЕОНИД АГАКОВ

СОЛДАТСКАЯ ДУША

*Рассказы*

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ
Чебоксары — 1947